ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
21
ШĂМАТКУН
№ 227 (9136)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
А. Иванов.—Комсомолăн районсемпе хуласенчи конференцийĕсем (1 стр.).
КПСС ИСТОРИНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА. **П. Михайлов.**—Партин VIII-мĕш съезчĕ (2 стр.).
Районсенчи парторганизацисен конференцийĕсем (2 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Чăваш АССР-ĕнчи шкулсенчи учительсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен (3 стр.).
ФЕЛЬЕТОН. **Павел Щипцов.** Алăсем çĕкленмеççĕ (3 стр.).
К. Борисов.—Шавĕ пур, ĕçĕ çук (3 стр.).
Е. Ефремов.—Колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем сутаççĕ (3 стр.).
Китайри ĕççыннисен производствăри çитĕнĕвĕсем (4 стр.).
США-н, Англин тата Францин Бермуд утравĕсем çинчи канашлăвĕ пирки (4 стр.).
Францин наци пухăвĕнче (4 стр.).
Индипе Чехословаки хушшинче суту-илӳ килĕшĕвĕ тунă (4 стр.).
Ф. Кузьмин.—Ыйтусемпе ответсем (4 стр.).

Финанс планне пур енĕпе те тултарар

Хуçалăхпа культура строительстви енĕпе пирĕн республика умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласси мĕнпур ресурссене мобилизацилениччен, палăртнă ĕçсене тума укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăнипе килет. Çакă вара бюджета тупăшсем енĕпе планах пĕр тикĕс тултарса пыма хушать. Бюджета укçа-тенкĕ вăхăтра тата çителĕклĕ пухăнсан, пур ĕçсем валли те укçа-тенкĕ кирлĕ чухлĕ парса тăма пулать.

Бюджетри укçа-тенкĕн пысăк пайĕ социализмла хуçалăх предприятийĕсенчен, суту-илӳ организацийĕсенчен пухăнмалла. Производство планне, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли, накоплени тумалли заданисене чыслăн пурнăçласан, хуçалăх расчетне çирĕплетсен, чĕртаварпа ытти материалсене перекетлесе пырсан, государствăн кашни пус укçине усăллă расходласан, кашни предприятиех бюджет умĕнчи хăйĕн обязательствисене те вăхăтра пурнăçлама пултарать.

Пирĕн республика промышленноçĕ тăхăр уйăх хушшинче çулталăклăх плана 74 процент, районсенчи промышленность—79,3 процент тултарчĕç. Анчах предприятисем бюджета укçа-тенкĕ парас ĕç пачах çителĕксĕр пулса пырать. Чылай предприятисем оборотран бюджета уйăрса памалли укçана вăхăтра хывмаççĕ, накоплени планне тултармаççĕ. Çакă мĕнрен килет-ха? Хăшпĕр предприятисенче плана пĕтĕмĕшпе тултарнипех лăпланса лараççĕ, производство планĕсене пур енĕпе те тултарса пыма сахал тăрăшаççĕ, укçа-тенке тирпейлĕ тыткаламаççĕ. Çавăнпа, строительство материалĕсем тăвакан промышленность предприятийĕсем продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли задание 1.350 пин тенкĕ чухлĕ тултарса çитермен. Бунсăр пуçне, вĕсем тăхăр уйăх хушшинче 253 пин тенкĕ убыток панă.

Суту-илӳ организацийĕсенче те çавăн пек. Чăвашторгпа унăн уйрăмĕсем тăхăр уйăхри плана ваккăн тавар сутас енĕпе 103,4 процент, чайнăйсемпе столовăйсем енĕпе 102,9 процент тултарчĕç пулин те, бюджета усламран уйăрса памалли плана 1.553 пин тенкĕ чухлĕ тултарса çитерейменĕç. Чăвашторгпа Шупашкар хулинчи торг ваккăн суту-илӳ тунă çĕрте 518 пин тенкĕ ытлашши расходланă, тавар сутнинчен бюджета кĕмелли укçана 782 пин тенкĕ пухса çитереймен.

Çак фактсенчен республика министерствисемпе ведомствисен тата финанс органĕсен промышленность предприятисен, суту-илӳпе кооперации организацийĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатма кирли уççăнах курăнать. Вĕсен ĕçне лайăхрах организацилемелле. Çавна асра тытас пулать: вĕсем йĕркеллĕ ĕçлесен, производство планĕсене пур енĕпе те тултарса пырсан çеç бюджет умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлама пултараççĕ.

Финанс планне ăнăçлă тултарас ĕçре халăх укçа-тенкине мобилизацилемелли заданисене вăхăтра пурнăçлани пысăк вырăн йышăнать. Тăваттăмĕш кварталта халăхран укçа-тенкĕ пухас ĕç пĕртак лайăхланчĕ. Партипе правительство халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă решенисемпе, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ ялхуçалăх налогĕ çинчен çĕнĕ закон йышăннипе хавхаланса, республикăри ĕççыннисен пысăк пайĕ налогсене тата ытти парăмсене срокчен тӳлесе татать. Çавна пула республика тăваттăмĕш кварталта халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 15-мĕш тĕлне 51,3 процент тултарчĕ. Çак кварталта ялхуçалăх налогĕ пухмалли плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Чурачăк районĕ 95,9 процент, Сĕрпӳ районĕ—82,4 процент, Вăрмар районĕ 70,2 процент тултарчĕç. Хресченсем хушшинче сарнă заем укçине Елчĕк районĕ виççĕмĕш кварталтах пухса пĕтерчĕ.

Çак тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: райисполкомсем, ял Совечĕсем, финанс органĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе конкретлă ертсе пырсан, ĕçе совет активне ытларах хутшăнтарсан, социализмла ăмăртăва анлă сарсан, бюджет тупăшсем енĕпе вăхăтра тата кирлĕ пек пурнăçланса пырать.

Анчах республикăри хăшпĕр райисполкомсем ялхуçалăх налогĕ, заем укçи, страховка укçи тата ытти тӳлевсене пухас ĕçре пĕтĕмпех финанс работникĕсем çине шанса лараççĕ. Тата çакна калас пулать: райисполкомсен ларăвĕсенче, райсоветсемпе ял Совечĕсен сессийĕсенче бюджет ыйтăвне час-часах сӳтсе явса паха решенисем йышăнаççĕ, анчах çав решенисене пурнăçлас ĕçе организацилемеççĕ. Çак сăлтавсене пула чылай районсем, уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Сĕмĕрле, Первомайски районĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре уйăхран уйăха кая юлса пыраççĕ.

Ку районсенче финанс ĕçĕ юлса пынине Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕнче те палăртнăччĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса панăччĕ. Анчах асăннă районсен исполкомĕсемпе финанс пайĕсен руководителĕсем çав кăтартусенчен, критиклесе асăрхаттарнисенчен халиччен те тивĕçлĕ вывод туман.

Финанс ĕçне хакламаннине пĕтерес пулать. Бюджета тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те пĕтĕмпех тултармалла. Кашни предприятин, кашни суту-илӳ организацийĕн руководителĕ, налогсем тата ытти парăмсем тӳлеме тивĕçлĕ кашни çын бюджет умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлассишĕн тимлĕн тăрăшма тивĕçлĕ. Оборотран тӳлемелли налог та, усламран илекен укçа та, тупăшран илекен налог та, государство тупăшĕсем енĕпе памалли укçа та, ялхуçалăх налогĕ те, заем укçи те, страховка укçи те срокра пухăнччăр. Ун чухне вара бюджетран халăх хуçалăхне аталантарма тата социально-культурăллă ĕçсем валли вăхăтра тата кирлĕ таран укçа-тенкĕ уйăрса пама, çапла майпа умра тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама май пулать.

Партипе совет органĕсен предприятисенче производство планĕсене пур енĕпе те срокчен тултарассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, укçа-тенкĕпе пурлăха перекетлессишĕн, колхозсенче ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва анлă сармалла; предприятисемпе колхозсем укçа-тенкĕ парăмĕсене тӳлесе татас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, ку ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме мерăсем йышăнмалла.

Ĕççыннисем хушшинче политикăллапа массăлла ĕçе анлă сарас пулать. Ку ĕçе совет активне, Советсен депутачĕсене пурне те хутшăнтармалла. Финанс ĕçĕнчи паха опыта сарнипе кая юлнисене малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентмелле.

Финанс планне пур енĕпе те вăхăтра тултарни ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатма, культурине ӳстерме, социализмла Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетме пулăшать.

Вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ

ВЦСПС-па СССР Вăрман тата хут промышленность министерстви вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕн условийĕсене çирĕплетнĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура йывăç хатĕрлемелли уйăхри плана ирттерсе тултарнă, пĕр тикĕс ĕçленĕ, ĕçе юрăхлă йывăç нумайрах кăларнă, кашни рабочи йывăç нумайрах турттарса кăларнă, механизмсемпе туллин усă курнă, материалсемпе электроэнерги перекетленĕ вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсем мала тухнă, тесе шутлаççĕ.

Ăмăрту итогĕсене, 1953 çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа, кашни уйăхрах республикăсемпе облаçсенчи вăрманпа хут промышленноçĕнчи рабочисен профсоюз обкомĕсемпе трестсем е комбинатсем пăхса тухаççĕ.

Социализмла ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă чи лайăх вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсене ВЦСПС-па СССР Вăрман тата хут промышленность министерствин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ. Çав ялавпа пĕрле пĕрремĕш премине—вăрман пунктне—10 пин тенкĕ, мастер участокне—5 пин тенкĕ укçа параççĕ.

Социализмла ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă вăрман пунктне 7 пин тенкĕ, виççĕмĕш вырăн йышăннине—5 пин тенкĕ преми параççĕ.

Ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă мастер участокне 3,5 пин тенкĕ, виççĕмĕш вырăн йышăннине—2,5 пин тенкĕ преми параççĕ.

Ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартнă вăрман пункчĕсене пама ВЦСПС-па министерство куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем тунă тата пĕрремĕш преми 35, иккĕмĕш преми—40, виççĕмĕш преми—50 уйăрнă.

Мастер участокĕсем валли—куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем тата пĕрремĕш преми 60, иккĕмĕш преми—74, виççĕмĕш преми—85 уйăрнă.

ВЦСПС-па СССР Вăрман тата хут промышленность министерстви СССР Вăрман тата хут промышленность министерствине пăхăнса тăракан вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсенче ĕçлекен рабочисене, мастерсене, инженерсене, техниксене тата служащисене Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва активлă хутшăнма, мĕнпур вăрман пункчĕсемпе мастер участокĕсем производство планне ирттерсе тултарассишĕн бригадăсем, мастер участокĕсем, вăрман пункчĕсем, çавăн пекех уйрăм рабочисем хушшинче социализмла ăмăртăва тата анларах сарма чĕнсе каланă.

«Лесная промышленность» хаçатран.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Мирпе туслăх эстафети

УЖГОРОД, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки халăхĕ кашни çулах Октябрьти Социализмла Аслă революци уявĕ ячĕпе мирпе туслăх эстафети ирттерет. Çак эстафетăна рабочисем, хресченсем, интеллигенци йышлăн хутшăнаççĕ.

...Чикĕри хапхасене праçник чухнехи пек илемлетнĕ. Советлă Социализмла Республикăсен Союзĕн, Украина ССР-ĕн тата Чехословаки Республикин государство ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ.

Паян кунта Чехословаки халăхĕн делегацийĕ килнĕ. Вăл мирпе туслăх эстафети илсе çитернĕ.

Словакири уполномоченнăйсен корпусĕн председателĕ Рудольф Стрехай ертсе пыракан делегацие ăшшăн, тăванла йышăннă.

Аслă совет халăхне чĕререн саламлакан эстафетăна Чехословакипе ССР Союзĕн чиккине Эмиль Затопек илсе çитернĕ,—вăл 1952 çулта пулса иртнĕ тĕнчери спорт ăмăртăвĕнче чи хăвăрт чупса мала тухнă, тĕнчери чемпион. Эстафетăна Украина ССР Верховнăй Совет Президиумĕн председатель заместительне, Совет Союзĕн Геройĕ ятне иккĕ хут илнĕ С. А. Ковпака панă.

Чикĕри тĕлпулу совет халăхĕпе Чехословаки халăхĕ тăванла туслă пурăннине уççăн кăтартса панă.

Украина ССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн заместителĕ С. А. Ковпак Чехословаки делегацине хисеплесе апатлану ирттернĕ.

Парник хуçалăхĕ саралса пырать

КУЙБЫШЕВ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри хуласем çывăхĕнчи районсем парник хуçалăхне чылай сараççĕ. Çурхупне тĕлне парник рамисем, иртнĕ çулхи сезонпа танлаштарсан, пилĕк хут ытларах пулаççĕ.

Молотов районĕнчи Сталин ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тăракан, Сызрань районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсем теплицăсем тăваççĕ. Ку теплицăсем Куйбышевпа Сызраньри промышленность предприятийĕсем панă ăшăпа усă курмалла.

Хулари предприятисем колхозсене парниксемпе теплицăсем тума пулăшаççĕ.

Силос хывмалли плана тултарнă

КИЕВ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Украинăри колхозсем силос хывмалли çулталăкри плана тултарнă.

Республикăра выльăх-чĕрлĕх валли, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 700 пин тонна ытларах тымарçимĕç хатĕрленĕ.



Киевра Днепр урлă çĕнĕ кĕпер хывнă. Кĕпере палăртнă срокран пĕр çул малтан туса пĕтернĕ. Çĕнĕ кĕпер Советла Украина столицин центрти пайне хулан промышленноçлă пысăк районĕпе—Дарницăпа çыхăнтарать. Украина ССР Министрĕсен Совечĕпе Украинăри Компартин Центральнăй Комитечĕ йышăнпă тăрăх, кĕпере Украина ССР Наукăсен академийĕн действительнăй членĕ Е. О. Патон ятне панă, вăл çак кĕпер проектне тăвас тата строительство ĕçне активлă хутшăннă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕнĕ кĕпер Дарница енчен пăхсан.

И. МЕЛЬНИК фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Коммунистсем рабочисен снабженине лайăхлатасси çинчен сӳтсе яваççĕ

МАГНИТОГОРСК, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Металлурги комбиначĕнче заводри парти организацийĕн пухăвĕ пулнă, унта комбинатри магазинсемпе столовăйсен ĕçне лайăхлатасси çинчен сӳтсе явнă. Ку ыйтупа рабочисен снабжени пайĕн начальникĕ Фаттахов юлташ доклад тунă.

Юлашки вăхăтра металлургсене апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем парса тăрасси чылай лайăхланнă. ОРС-ăн тавар çаврăнăшĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх пуçланнăранпа 54 процент ӳснĕ, хăшпĕр йышши таварсем—аш-какай продукчĕсем, çусем, пурçăн пир-авăр сутасси 2,5 хут ӳснĕ. ОРС-ăн пулăшуллă хуçалăхĕ пиншер гектар акмалли çĕр йышăнса тăрать. Кăçал тĕштырăсен, пахча çимĕçсен, выльăх апачĕн культурăсен тухăçлăхне ӳстермелли, çавăн пекех тата аш-какай тума, сĕт суса илме выльăх-чĕрлĕх усрамалли плана ирттерсе тултарнă.

Заводри партком ОРС ĕçĕсем çинчен час-часах сӳтсе явнă, ăна суту-илӳ ĕçĕнчи кадрсене тупса çитерме, вĕсен квалификацине ӳстерме пулăшнă. Пулăшуллă хуçалăх ĕçне лайăхлатма тăрăшнă.

Коммунистсем сĕннипе нумай магазинсем халăха мĕнле таварсем ытларах кирлине тĕпчесе пĕлеççĕ. Доменщиксем, коксовиксем, мартеновецсем валли ĕçлекен столовăйсенче апатсене лайăхрах хатĕрлеме тытăннă. Çĕрлехи сменăра ĕçлекен рабочисем валли те вĕри апат хатĕрлеççĕ.

Пухура пулнисем магазинсемпе столовăйсем çителĕксĕррине, магазинсенче, цехсенчи столовăйсенче ĕçлекен чылай работниксем культура енĕпе кая юлнине, суту-илӳ работникĕсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе çителĕксĕр туса пынине палăртнă.

Пуху рабочисен снабженине малалла лайăхлатмалли майсене палăртса хунă. Комбинатăн пулăшуллă хуçалăхне вăйлатма 60 миллион тенкĕ уйăрса панă.

ПРЕДПРИЯТИСЕМ ЯЛХУÇАЛĂХНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ВОРОШИЛОВ (Приморье крайĕ), ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ворошиловри Микоян ячĕпе тăракан комбинат ĕнер Бурят-Монголи АССР-ĕпе Хакас автономиллĕ облаçне çĕршер тонна шрот ăсатнă. Шрот—мĕнпур выльăхсемшĕн питĕ паха апат. Вăл сойăран çу тунă хыççăн юлать. Шротра белоксем нумай.

Ворошиловри ытти предприятисем те производство юлашкисене ялхуçалăхне параççĕ.

Аш-какай комбиначĕ тăваççĕ

КАРАГАНДА, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хулан кăнтăр хĕвеланăç хĕрринче çĕнĕ аш-какай комбиначĕ туса пĕтереççĕ. Ку вăл Казахстанри апат-çимĕç туса кăларакан чи пысăк предприятисенчен пĕри пулать. Строительствăри тĕп ĕçсене туса пĕтернĕ ĕнтĕ, халĕ оборудовани вырнаçтараççĕ. Автоматла конвейер, аш ваклакан электропăчкăсем, çу шăратмалли çĕнĕ йышши хурансем вырнаçтарса лартнă.

Рабочисем валли поселок тăваççĕ. Унта пурăнмалли çуртсем, вăтам шкул, клуб, ача сачĕ пулать. Инçетрен выльăх кĕтĕвĕсем хăваласа пыракансем валли гостиница лартнă.

Комбинат 1954 çулта ĕçлеме тытăнать.

Тĕрлĕрен хыпарсем

☆ Гурьев облаçĕнчи колхозсем çил вăйĕпе анлăн усă кураççĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче çилпе ĕçлекен двигательсем чылай лартнă. Вĕсемпе выльăх-чĕрлĕхе шăварма шыв уçлаççĕ. Çуллахи вăхăтра çав шывпа çĕрулмипе пахча çимĕçсене шăварса ӳстерме усă кураççĕ. Иккĕ çул хушшинче колхозсенчи кĕтӳ çӳретмелли вырăнсенче çилпе ĕçлекен двигательсем 200 лартаççĕ.

☆ Улански районĕнчи (Кăнтăр Казахстан облаçĕ) Канайка поселокĕнче медицина сестрисем вĕрентсе хатĕрлемелли шкул уçăлнă. Халĕ республикăра фельдшерсем, акушеркăсем, медицина сестрисем вĕрентсе хатĕрлемелли шкулсем 20 ытла ĕçлеççĕ.

☆ Грузин ССР-ĕнче культпросвет учрежденийĕсем тăваççĕ. Руставире, Ткварчелире тата Ткибулире культура дворецĕсем тума тытăннă. Культура дворецĕсене тума 24 миллион тенке яхăн уйăрса панă. Халĕ республикăра культура дворецĕсемпе культура çурчĕсем, клубсем, хĕрлĕ кĕтессем тата ытти культура учрежденийĕсем 1.500 яхăн шутланаççĕ.

☆ Латвири рабочисемпе колхозниксем хаçат-журнал нумай çыранса илеççĕ. Елгава районĕнчи ялхуçалăх артелĕсенче кашни çемье виçшер экземпляр хаçат-журнал çыранса илет. Юлашки çулсенче республикăри хуласемпе ялсенче хаçат-журнал иккĕ хут ытларах саралакан пулнă.

☆ Ленинградри цирк артисчĕсем Ленинград, Псков тата Новгород облаçĕсенчи ялсене тухса çӳреме цирк коллективĕ тунă. Коллектив Кингисепп тата Сланцевски районĕсенчи ялсенчи клубсенче малтанхи концертсем ирттернĕ.

(ТАСС).

Комсомолăн районсемпе хуласенчи конференцийĕсем

Республикăри комсомол организацийĕсен отчетпа суйлавĕсем паллă кунсенче пулса иртеççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те хăватлăн малалла аталантарма пысăк программа палăртса пачĕ. Çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне хăвăрт аталантарасси çинчен партипе правительство йышăннă постановленисене пĕтĕм совет халăхĕ чĕререн ырласа кĕтсе илчĕ. Çитес 2—3 çул хушшинче халăха промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç питĕ нумай парса тăмалла тăвас тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕçсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви мĕнпур ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн çине тăрса тăрăшнине кăтартса параççĕ. Хальхи тапхăрта мĕнпур фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе МТС-сенче—пур çĕрте те миллионшар совет çыннисен пултаруллă хĕрӳ ĕçĕ вĕресе тăрать.

Пирĕн республикăри çамрăксен ĕçри хастарлăхĕпе политикăлла активлăхĕ те чылай ӳсрĕ. Комсомолăн пуçламăш организацийĕсенче пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсем çавна уççăнах кăтартса пачĕç. Комсомолецсем отчетпа суйлав пухăвĕсенче КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене, партипе правительство совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртмелли, çамрăксене коммунизмла воспитани парас ĕçе малалла лайăхлатмалли конкретлă ĕçсем çинчен каларĕç.

Уйрăмах Чкаловски тата Канаш районĕсенчи, Улатăр тата Канаш хулисенчи комсомолăн пуçламăш организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем активлă иртрĕç.

Анчах комсомолăн пуçламăш организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне пулнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене те курмасăр иртсе кайма çук. Сăмахран, Ишлей районĕнчи чылай пуçламăш организацисенче пухăва начар хатĕрленнĕ пирки тата çак ĕçе ВЛКСМ райкомĕ тĕрĕслесе тăман пирки отчетпа суйлав пухăвĕсем йĕркеллĕ иртмен, вĕсенче критикăпа самокритика çителĕксĕр пулнă. Чапаев ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан тата «Знамя» колхозсенче комсомол комитечĕн отчетлă докладне сӳтсе явма 2—3-шер çын кăна хутшăннă.

Комсомолăн ертсе пыракан органĕсене суйласси çинчен ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ панă инструкцие пăсни те пулнă. 13 шкулти комсомол организацийĕсенче отчетлă пуху ирттерес вырăнне, ВЛКСМ районти конференцине кайма делегатсем кăна суйланă.

Етĕрне районĕнчи комсомол организацийĕсенче те отчетпа суйлав пухăвĕсем ирттерес ĕçе начар организациленĕ, çитменлĕхсене хатĕрленнĕ пирки нумай çĕрте пухусем палăртнă вăхăтра пулса иртмен.

1953 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче республикăри районсемпе хуласенче комсомолăн отчетпа суйлав конференцийĕсем уçăлаççĕ. Малтанхи конференцисем Вăрмар, Вăрнар, Шăмăршă, Шăхасан, Сĕрпӳ, Советски районĕсенче тата Улатăрпа Канаш хулисенче пулса иртмелле.

Комсомолăн районти, хулари организацийĕн пурнăçĕнче конференци пысăк событи пулса тăрать. Конференцире комсомолăн районти, хулари комитечĕ отчетлă тапхăрта тунă ĕçсене пăхса тухмалла тата комсомолăн пĕтĕм ĕçне малалла лайăхлатма конкретлă мероприятисем палăртмалла. Çакна пысăк вырăна хурса, ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсем нумайăшĕ, отчетпа суйлав конференцийĕсене хатĕрленнĕ май, хуларипе ялти çамрăк ĕçченсен хастарлăхĕпе политикăлла активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Сĕрпӳ районĕнчи комсомол организацийĕсем отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ вăхăтра кăна хăйсен ретне 92 çын илнĕ, Пăрачкав районĕнче—78 çын, Йĕпреç районĕнче 70 çын комсомола илнĕ. Комсомолецсемпе колхозлă ялти çамрăксене выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме, ялхуçалăх механизаторĕсен шкулĕсемпе училищисене вĕренме чылай янă.

Районти тата хулари конференцисем пленумпа организацилĕх енчен çӳлĕ шайра иртмелле. Критикăпа самокритикăна анлăн сарса яни, çитменлĕхсене хăюллăн палăртса, вĕсене пĕтерме тăрăшни конференцисен ĕçĕнче уççăн курăнса тăмалла.

Конференцисенче комсомол организацийĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртме партипе совет органĕсене мĕнле пулăшнине, партипе правительство çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне хăвăрт аталантарас, совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культура шайне пĕрмаях ӳстерсе пырас тĕлĕшпе йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес ĕçе комсомол организацийĕсем мĕнле хутшăннине тĕплĕн сӳтсе явмалла.

Çамрăксемпе хĕрачасене ĕç çине, общество харпăрлăх çине социализмла пăхма, ăнлануллă дисциплина тытса пыма воспитани парас, комсомолецсене политикăлла тата пĕтĕмĕшле пĕлӳсем илме пулăшас, çамрăксемпе хĕрачасен хавасла та содержанилле канăвне организацилес ыйтусем конференцире тĕп вырăнта тăмалла.

Конференцисенче ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсем пуçламăш организацисене мĕнле майсемпе ертсе пынине анлăн сӳтсе явмасăр, комсомолăн уйрăм комитечĕсем юрăхсăр меслетсемпе ертсе пынине вăхăтра палăртмасăр хăварма юрамасть, ĕçре чи кирлине кăтартса памалла.

Конференцисенче КПСС XIX-мĕш съезчĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ кăтартса панă историлле задачăсене пурнăçа кĕртме комсомолецсемпе çамрăксен вăйне мобилизацилеме, комсомолăн пуçламăш организацийĕсене организаципе политика тĕлĕшĕнчен çирĕплетме конкретлă решенисем йышăнмалла.

Комсомол комитечĕн, ревизи комиссийĕн çĕнĕ составне суйласси конференци ĕçĕнче ответлă самант пулса тăрать.

Комсомолăн шалти демократине тĕрĕс пурнăçласа, ВЛКСМ райкомĕсен, хула комитечĕсен, ревизи комиссийĕсен составне чи лайăх, практикăлла ĕçре палăрнă комсомолецсене суйламалла.

Комсомолăн районсемпе хуласенчи конференцийĕсем ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен ĕçне, вĕсем куллен, ĕçе пĕлсе, конкретлă ертсе пынине тĕрĕслекен пысăк экзамен пулса тăрать. Çак экзамена тытма тивĕçлĕ пулмалла.

Конференцие ирттерме пур енĕпе те лайăх хатĕрленни делегатсен активлăхне ӳстерме май парать. Критикăпа самокритикăна анлăн сарса, делегатсем комсомол органĕсен ертсе пырас ĕçри пур çитменлĕхсене те палăртмалла.

Конференцисене ăнăçлă ирттересси партин районти тата хулари организацийĕсем çак ĕç çине тимлĕ пăхниччен, конференцие хатĕрленсе ирттерес ĕçе пĕрмаях тĕрĕслесе тăнинчен нумай килет. Конференцисене партипе правительство кăтартса панă задачăсене пурнăçлама çамрăксен вăйне мобилизацилес, комсомол организацийĕсен пĕтĕм ĕçне малалла лайăхлатас тĕллевпе ирттермелле.

А. ИВАНОВ,
ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ.

КПСС историне вĕренекенсене пулăшма

ПАРТИН VIII-мĕш СЪЕЗЧĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн историйĕнче РКП(б) VIII-мĕш съезчĕ пысăк вырăнта тăрать. Çак съездра партин çĕнĕ программине йышăннă. VIII-мĕш съезд вăтам хресченсем тĕлĕшпе партин политикине улăштарнă. Съездра çар ыйтăвĕ тăрăх йышăннă решенисем Хĕрлĕ Çара ӳссе çирĕпленме çав тери пысăк пулăшу панă, каярахпа вара пирĕн Хĕрлĕ Çар Антантăн хĕçпăшаллă похочĕсене виççĕшне те сирсе янă, ют çĕршыв интервенчĕсене хамăр Тăван çĕршывран хăваласа кăларнă.

РКП(б) VIII-мĕш съезчĕ кăткăс лару-тăрура пухăннă: пĕр енчен, Германие çĕмĕрсе тăнă хыççăн, Антанта çĕршывĕсем пĕтĕм вăйпа Совет влаçне хирĕç интервенци тунă, тепĕр енчен, Европăра—пуринчен ытла вăрçăра парăнтарнă çĕршывсенче—революцилле юхăм вăйланса, пирĕн çĕршывăн лару-тăрăвне нумай çăмăллатнă. VIII-мĕш съездăн пысăк вырăнта тăракан политикăлла тата организацилле чылай ыйтусем тăрăх партин сул-йĕрне палăртса памалла пулнă, çамрăк Совет республикин кун-çулĕ çав ыйтусенчен килнĕ.

РКП(б) VIII-мĕш съезчĕ Мускавра, 1919 çулхи мартăн 18—23-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Съездра çĕ тăвакан сасăпа 301 делегат пулнă, вĕсене партин 313.766 членĕ суйласа янă. Канашлакан сасăпа 102 делегат пулнă.

Съезда В. И. Ленин уçнă. Съезд умĕн Коммунистсен партийĕпе Совет государствин çав тери паллă деятелĕ, рабочи класа ирĕке кăларассишĕн кĕрешме хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă çын Я. М. Свердлов вилнĕ. Съезда уçнă чухне вăна асăнса В. И. Ленин сăмах каланă.

VIII-мĕш съездра сӳтсе явнă тĕп ыйтусем çаксем пулнă: РКП(б) Центральнăй Комитечĕн отчечĕ, парти программи, вăтам хресчен çинчен тăнă ыйту, Хĕрлĕ Çар строительствин ыйтăвĕ тата организацилле ыйтусем.

РКП(б) Центральнăй Комитечĕн отчетне В. И. Ленин тунă, вăлах партин программи çинчен, вăтам хресченсем çине мĕнле пăхасси çинчен докладсем туса панă.

РКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă докладра В. И. Ленин партин тулашри тата шалти политикин ыйтăвĕсене çутатса панă.

Коммунистсен партийĕпе Совет государствин тулашри политикинче ун чух империализмла çĕршывсемпе мĕнле çыхăнусем тытас ыйту тĕп вырăнта тăнă. Паллă ĕнтĕ, Совет влаçĕ хăйĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах мир политики, пур государствăсемпе те ырă кӳршĕсем пек килĕштерсе пурăнас политика тытса пынă, халĕ те çав политикăна тытса пырать. Совет правительстви Брестра Германипе мир туни çине, Антанта çĕршывĕсем Принц утравĕсем çинче конференци пухма сĕнни çине мĕнле пăхнине илсе, В. И. Ленин Совет правительствин мирлĕ политикине кăтартса панă.

Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчере мире сыхласа тата çирĕплетсе пырас политикăна яланах çирĕп тытса пынă. «Пирĕн тулашри политикăн çак тĕп çул-йĕрĕ яланах çирĕп пулнă, малашне те çавăн пекех çирĕп пулать» (К. Е. Ворошилов. Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарни).

Шалти политика çине куçса, Ленин Хĕрлĕ Çар çинчен тата ялта ĕçлесси çинчен каланă. Юлашкинчен В. И. Ленин партин Центральнăй Комитечĕ туса иртернĕ организацилле ĕçе çутатса панă.

Съезд РКП(б) Центральнăй Комитечĕн политикăлла тата организацилле ĕçне пĕр кăмăлпа ырланă.

VIII-мĕш съездра партин çĕнĕ программине йышăннă. Паллă ĕнтĕ, партин пĕрремĕш программине 1903 çулта РСДРП II-мĕш съездĕнче йышăннă. Партин II-мĕшпе VIII-мĕш съезчĕсем хушшинчи вăхăтра тĕнчере те, Российăра хăйĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртнĕ.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче тата XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче ĕлĕкхи, монополисем пуличченхи капитализм вырăнне монополилле капитализм—империализм йышăннă. Империализм вăл—капитализмăн чи çӳлти тата юлашки сыпăкĕ. В. И. Ленин ăна вилекен капитализм, пролетарилле революци пулас умĕнхи тапхăр, тенĕ.

1917 çулхи октябрьте Российăри рабочи класс, чи чухăн хресченсемпе союзлă пулса, вилĕмсĕр Ленин çул кăтартса пыракан Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе империалистсен влаçне сирпĕтсе антарчĕ те пролетариат диктатури, рабочисемпе хресченсен влаçĕ туса хучĕ. Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерни этемлĕх историйĕнче çав тери пысăк улшăну турĕ, кивĕ, капитализмла тĕнче вырăнне çĕнĕ, социализмла тĕнче пуçланчĕ.

Совет революцийĕн влиянине пула тепĕр çултан Австро-Венгрире тата Германире революцисем пулса иртнĕ. Капитализмла çĕршывсенче нумайăшĕнче революцилле юхăм çĕкленнĕ май коммунистсен партийĕсем пулса кайнă, çак никĕс çинче III-мĕш Интернационал тума май килнĕ.

Парти программинче çав улшăнусем пурте палăрса тăмалла пулнă.

Кунсăр пуçне, çак вăхăт хушшинче Ленин социализмла революци çинчен,—социализм малтан нумай çĕршывсенче мар, уйрăм илнĕ пĕр капитализмла çĕршывра та çĕнтерме пултарни çинчен калакан гениалле теорипе тата пролетариат диктатурин чи лайăх политикăлла форми Советсем пулса тăни çинчен калакан вĕрентӳпе марксизма пуянлатнă.

В. И. Ленин Апрельти хăйĕн чаплă тезисĕсенчех парти программине улăштарма хушнă. Парти программине улăштарас ыйтăва VII-мĕш (Апрельти) конференцире, партин VI-мĕш тата VII-мĕш съезчĕсенче пăхса тухнă. VII-мĕш съездра партин çĕнĕ программине çырса хатĕрлеме уйрăм комисси тунă, комиссие В. И. Ленин, И. В. Сталин тата ыттисем те кĕнĕ.

Комисси РКП(б) программин проектне ăна В. И. Ленин çырнă. Çав проекта вара VIII-мĕш съезд уçăличчен пĕр уйăх малтан пичетлесе кăларнă.

Программăра капитализмпа унăн чи çӳлти сыпăкне—империализма характеристика панă. Программăра государствăсен икĕ системине—буржуалла-демократилле тата советла системине танлаштарса кăтартнă. Программăра партин социализмшăн кĕрешмелли конкретлă задачисене кăтартса панă: буржуазие вĕçне çитиех экспроприацилемелле, çĕршыв хуçалăхне пĕрлĕхлĕ социализмла план тăрăх тытса пымалла, профсоюзсене халăх хуçалăхне организацилес ĕçе хутшăнтармалла, социализмла ĕç дисциплинине ĕçе кĕртсе пымалла, халăх хуçалăхĕнче килĕ специалистсемпе усă курмалла, вĕсен ĕçне совет влаçĕн органĕсем тĕрĕслесе тăмалла тата ĕççыннисенчен çĕнĕ специалистсем хатĕрлемелле, вăтам хресченсене майĕпе тата план йĕркипе çĕнĕ пурнăç тума хутшăнтармалла. Çакă вăл пирĕн çĕршывра социализм тумалли программа пулнă.

Программăра, империализм капитализмăн чи çӳлти сыпăкĕ пулса тăни çинчен калаçнипе пĕрлех, промышленность капитализмĕпе ахаль таварлă хуçалăх çинчен ăнлантарса панă. Программăра пирĕн экономика кăткăс пулнине шута илмелле, çĕршывра хуçалăхăн тĕрлĕ укладĕсем, çав шутра вак таварлă хуçалăх та пуррине, вăл вăтам хресчен тытса пыракан хуçалăх пулса тăнине кăтартса памалла, тенĕ В. И. Ленин.

Парти программине сӳтсе явнă чухне съездра программăн пĕтĕмĕшле пайĕ пирки тата наци ыйтăвĕ тăрăх вăйлă кĕрешӳ пуçланнă. Марксизм-ленинизмăн ирсĕр тăшманĕ, сутăнчăк Бухарин капитализм çинчен, вак таварлă производство çинчен, вăтам хресчен хуçалăхĕ çинчен калакан пунктсене программăран кăларма сĕннĕ.

Бухаринăн большевизма хирĕç пыракан шухăшĕсене В. И. Ленин тапăкланах çĕмĕрсе тăкнă, çав шухăшсен теорилле витĕмсĕрлĕхне тата политикăлла сиенлĕхне кăтартса панă.

Вак таварлă хуçалăх çинчен ăнлантарса панине программăран кăларма сĕнсе, Бухарин тата партин ытти тăшманĕсем, меньшевикла-троцкистла позици çинче тăрса, совет строительствинче вăтам хресчен рольне йышăнман. Вак таварлă хуçалăха шута илмесĕр хăварса, Бухарин хресченсен вак таварлă хуçалăхĕсенчен кулакла элементсем ӳссе тухнине шăлса лартасшăн пулнă.

Съезд Бухаринăн капитулянтла сĕнĕвне сивлесе сирсе янă, партин программин теорилле пайне В. И. Ленин сĕннĕ редакципе çирĕплетнĕ.

Съезд наци ыйтăвĕ тăрăх та Бухаринпа Пятаковăн большевизма хирĕç пыракан шухăшĕсене тапăкланах отпор панă. Программăна нацисен самоопределени прави çинчен калакан пункт кĕртнине, нацисем пĕр тан правăллă пулнине партин çав усал тăшманĕсем хирĕç пынă, вĕсем ку лозунг тĕрлĕ национальноçсен пролетарийĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса ярать, социализмла революцире çĕнтерӳ тума кансĕрлет, тенĕ.

Бухарин наци ыйтăвĕнчи хăйĕн сутăнчăкла позицине «ĕççыннисен самоопределени прави» текен лозунгпа витсе хума хăтланнă. Шăпах çак лозунг тĕрлĕ национальноçсен пролетарийĕсене пĕрлешмешкĕн чăрмантарма, социализмла революцие чарса лартма пултарнă.

Бухаринпа Пятаковăн çак питех те сиенлĕ великодержавлă шовинистла шухăшĕсене В. И. Ленин тапăкланах çĕмĕрсе тăкнă.

РКП(б) VIII-мĕш съездĕнче йышăннă программа ку таранчченех пирĕн партин ертсе пыракан документĕ пулса тăрать. Анчах вăл кивелнĕ ĕнтĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ çакна палăртрĕ: партин VIII-мĕш съезчĕ пулнăранпа (1919 ç.) тĕнчери çĕршывсем хушшинчи çыхăнусем енĕпе те, ССР Союзĕнче социализм строительстви енĕпе те тĕпренех улшăнусем пулчĕç, çавна пула программăри чылай положенисем тата партин унта кăтартса панă задачисем, вĕсене çав тапхăр хушшинче пурнăçа кĕртнĕ май, хальхи условисемпе тата партин çĕнĕ задачисемпе текех килĕшсе тăмаççĕ.

Çакна шута илсе, XIX-мĕш съезд Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн программине çĕнетсе çырма решени йышăнчĕ, çак ĕçе тума комисси уйăрса, çĕнетсе çырнă программа проектне Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн çитес съездĕнче пăхса тухмашкăн тăратма хушрĕ.

VIII-мĕш съездăн ĕçĕнче вăтам хресчен çине мĕнле пăхас ыйту пысăк вырăнта тăнă.

Граждан вăрçинчи çĕнтерӳ тата социализм строительствинчи çитĕнӳсем пролетариатпа буржуази хушшинче иккĕленсе тăракан вăтам хресченсем кам майлă пулнинчен чылай килнĕ, мĕншĕн тесен хресченсен чи пысăк пайĕ вăтам хресченсем пулнă. Вăтам хресченсем Хĕрлĕ Çарăн тĕп резервĕ пулнă тата фронтпа хуласем валли тырпул пуринчен ытла вĕсем парса тăнă. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче» çапла палăртнă: чехословаксем, белогвардеецсем, кулаксем 1918 çулта çулла Атăл тăрăхĕнче Совет влаçне пĕтерсе хума пултарни вĕсене вăтам хресченсен чылай пысăк пайĕ пулăшнинчен килнĕ. Центрти Российăри кулаксен пăлхавĕсен вăхăтĕнче те çавăн пекех пулнă. Анчах 1918 çулта кĕркунне вăтам хресченсен масси Совет влаçĕ енне тăнă. Çак историлле улшăну хăй тĕллĕн пулман, ăна партипе рабочи класс малтанах хатĕрлесе пынă.

Большевиксем Октябрьти социализмла революцичен те, революци хыççăн та çапла каланă: вăтам хресченсем Совет влаçĕн тăшманĕсем мар, уступкăсем туса, вăтам хресченсемпе килĕшме тăрăшмалла, тенĕ. Вăтам хресчене рабочи класс енне тăма пулăшас тесе, парти мĕн кирлине пурне те тунă. Хресченсем, уйрăмах ют çĕршыв интервенчĕсемпе белогвардеецсем оккупациленĕ районсенчи хресченсем, контрреволюци çĕнтерсен тепĕр хут помещиксене власть парасса, хресченсенчен çĕре туртса илессе, вĕсене хĕн-хурпа асап кăтартасса лайăх курнă, çакă ĕнтĕ хресченсен шухăш-кăмăлне улăштарнă. Хресченсен шухăш-кăмăлне улăштарма чухăнсен комитечĕсен ĕçĕ те пулăшнă, çав комитетсем кулаксем хирĕçнине çĕмĕрсе тăкнă.

Ку, паллах, вăтам хресченсем иккĕленме пăрахнине пĕлтермен. Анчах революцин тĕп ыйтăвĕсем тĕлĕшпе, пролетариат влаçĕ тĕлĕшпе вăтам хресченсем рабочи класс енне тăнă. Вăтам хресченсен шухăш-кăмăлĕнчи улшăнăва парти хресчен ыйтăвĕ тĕлĕшпе тытса пыракан политикине улăштарнине çирĕплетнĕ.

VIII-мĕш съезд «Вăтам хресченсем çине мĕнле пăхасси çинчен» йышăннă резолюцире çапла кăтартса панă: парти организацийĕсен вăтам хресченсене кулаксенчен уйăрас ĕçе тĕплĕн туса пымалла, вăтам хресченсен нушисемпе ыйтăвĕсене тимлĕн, тăрăшса тивĕçтерсе пырса, вĕсене рабочи класс майлă çавăрмалла. Вăтам хресчен кая юлнине хирĕç ирĕксĕрлесе мар, ӳкĕтлесе кĕрешме хушнă съезд. «Кунта вăйпа ирĕксĕрлени пĕтĕм ĕçе пĕтерсе хурать»,—тенĕ В. И. Ленин. Çавăнпа та съезд ялта социализмла мероприятисем иртерме (коммунăсем, ялхуçалăх артелĕсем тума), çак ĕçе питĕ асăрханса, васкамасăр, ирĕксĕрлемесĕр тума хушнă.

РКП(б) VIII-мĕш съезчĕ хресченсем тĕлĕшпе кăтартса панă çĕнĕ стратегилле лозунг пролетариата вăтам хресченсемпе çирĕп союз тума, çав вăхăтрах, чухăнсем çине таянса, кулаксене хирĕç кĕрешме хушнă. Çак союзра пролетариатăн ертсе пырас рольне сыхламалла пулнă.

VIII-мĕш съездчен парти вăтам хресчене нейтрализацилес политика тытса пынă. Парти вăтам хресчен кулак енне, буржуази енне ан тăтăр тесе тăрăшнă. Анчах халĕ ку çителĕксĕр пулнă. VIII-мĕш съезд вăтам хресченсене нейтрализацилес политикăран вĕсемпе çирĕп союз тăвас политикăна куçнă.

Съезд хресченсем тĕлĕшпе çĕнĕ политика кăтартса пани граждан вăрçине çĕнтерӳпе вĕçлес, ют çĕршыв интервенцине çĕмĕрсе тăкас ĕçре калама çук пысăк вырăнта тăнă. Хресченсен масси пулăшман пулсан, совет влаçĕ Деникина, Врангеле тата ытти тăшмансене çĕмĕрсе тăкма пултарайман пулĕччĕ.

Рабочи класпа ĕçхресченĕсем хушшинче граждан вăрçи вăхăтĕнче пулнă вăрçăлла-политикăлла союз, çĕнĕ экономикăлла политикăна куçсан, социализм строительстви валли рабочи класпа хресченсем хушшинчи экономикăлла çирĕп союз пулса тăнă.

Коммунистсен партийĕ социализм строительствин пур тапхăрĕсенче те рабочи класпа хресченсен союзне яланах çирĕплетсе пынă, çакна вăл пролетариат диктатурин аслă принципĕ тата пирĕн çĕршыв малалла, коммунизм патне каймалли шанчăк тесе шутланă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановлени тата юлашки вăхăтра партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарас, совет суту-илĕвне лайăхлатас, халăха куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе йышăннă постановленисем ĕççыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатаççĕ, рабочи класпа хресченсен союзне татах та çирĕплетеççĕ.

VIII-мĕш съездра Хĕрлĕ Çар строительстви çинчен уйрăм ыйту тăнă, Советсен республикин кун-çулĕнче çак ыйту питех те пысăк вырăнта тăнă. 1918 çулта июльте В. И. Ленин çапла каланă: «Россия Социализмла Федеративлă Советлă Республикин пурнăçĕн пĕтĕм ыйтăвĕ, Российăри революцин пĕтĕм ыйтăвĕ çар ыйтăвĕ пулса тăчĕ», тенĕ.

Çар ыйтăвĕ синчĕ тухса тăни çакăнтан та килнĕ: РКП(б) речĕсенче партин çар политикине хирĕç пыракан çынсем пулнă. Парти политикине хирĕç пыракансем пуринчен ытла троцкистсем пулнă. Çарта ертсе пыракан вырăнсене лексе, троцкистсем патша çарĕнчи ĕлĕкхи çар специалисчĕсем умĕнче пуç тайнă, çарти вăтă большевиксен кадрĕсем çине, уйрăмах çар комиссарĕсем çине, кураймасăр, тăшманла пăхнă, большевиксен пуçарăвне пусарса пынă, вĕсен çар ĕçĕнчи пултарулăхне ӳсме чарса тăнă, пай вилесен вĕсене вăйне пĕтерсе хума та хатĕр пулнă. Совет влаçне чун-чĕререн парăннă çарти ответлă работниксене—коммунист-фронтовиксене Троцкий персе вĕлерме, çапла вара тăшмана пулăшма хăтланни çинчен, съездра нумай тĕслĕхсем кăтартса панă. Центральнăй Комитет ĕçе хутшăнни кăна тата çарти работниксем хирĕçлени çав юлташсене вилĕмрен çăлса хăварнă.

Паллах, троцкистсем партин çар политикине çавăн пек пăсни съезд делегачĕсене çав тери тарăхтарнă. Съездра «çар оппозицийĕ» хăй шухăшĕсене тухса каланă. Ку оппозицие «сулахай коммунистсем» пулнă çынсем сахал мар кĕнĕ, çавнашкалах унта пихçан та, нимĕнле оппозицире те пулман çынсем те пулнă, вĕсем Троцкин çарти ĕçĕсемпе кăмăлсăр пулнă.

Троцкий партин çар политикине пăснине хирĕç кĕрешсе, «çар оппозицийĕ» çав вăхăтрах çар строительствин чылай ыйтăвĕсем тăрăх тĕрĕс мар шухăшсене хӳтĕленĕ. Çак оппозици çарти партизанла йĕркесене хӳтĕленĕ, ялании Хĕрлĕ Çар тăвасшăн пулман, çар специалисчĕсемпе усă курма килĕшмен, чăн-чăн çар тума кирлĕ хурçă пек çирĕп дисциплинăна хирĕç пынă. Ленинпа Сталин «çар оппозицине» тапăкланах хирĕç тухса каланă. «Çар оппозицине» хирĕçлесе, И. В. Сталин çапла каланă: «Е чăн-чăн рабочисемпе хресченсенчен, пуринчен ытла хресченсенчен, çирĕп дисциплинăлла çар туса, республикăна хӳтĕлесе хăварăпăр, е пĕтсе ларăпăр»,—тенĕ.

Çар ыйтăвĕ тăрăх çар комиссийĕ хатĕрленĕ резолюцие пĕр сасăн йышăннă. «Çар оппозицийĕн» чылай сĕнĕвĕсене сирсе ярса, съезд Троцкие çĕмĕрсе тăкнă. Съезд центрти çар учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма тата çарта коммунистсен рольне вăйлатма хушнă.

РКП(б) VIII-мĕш съезчĕ çар ыйтăвĕ тăрăх йышăннă решени Совет республикин хĕçпăшаллă вăйĕсене çирĕплетес, ăна партин патне ытларах çывхартас тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăнта тăнă.

Граждан вăрçи вут-хĕмĕнче ӳссе çитĕннĕ Совет Çарĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, калама çук хăватлă вăй пулса тăчĕ, фашистла агрессорсене çĕмĕрсе тăкса, вăл пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ, Европăпа Азири халăхсене фашизм чуралăхне кĕрсе ӳкесрен хăтарчĕ, халĕ вăл коммунизм тăвакан совет халăхĕсен пултарулла мирлĕ ĕçне çирĕп сыхлать.

VIII-мĕш съездра тата партипе совет строительствин ыйтăвне сӳтсе явнă. Бу ыйту тăрăх съезд Сапронов—Осинскин оппортунистла ушкăнне отпор панă, çав ушкăн Советсенче партин ертсе пыракан рольне йышăнман. Партипе совет строительстви çинчен йышăннă резолюцире парти массăсемпе çыхăну тытассине çирĕплетсе пыма кирлине уйрăмах палăртнă.

Съезд партин социальнăй составне лайăхлатасси çинчен, партие ют элементсенчен тасатма партин мĕнпур членĕсене тепĕр хут регистрацилесе тухасси çинчен решени йышăннă.

Юлашкинчен съезд партин Центральнăй Комитетне суйланă. Центральнăй Комитета ертсе пыма Ленинпа Сталина суйланă. Съезд парти организацийĕсене сыхлăха икĕ хут ӳстерме, пролетарилле государство строительствине пĕтерсе хума кирек мĕнле хăтланнине те нимĕн шеллемесĕр çапса аркатма чĕннĕ.

VIII-мĕш съездра парти программине йышăнни пысăк çитĕнӳ пулнă. Çак программа тăрăх ĕçлесе тата ăна пурнăçа кĕртсе, Коммунистсен партийĕ историре малтанхи хут социализмла общество турĕ, ытти çĕршывсенчи халăхсене эксплуататорсен пусмăрĕнчен ирĕке тухмалли, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тумалли çула кăтартса пачĕ. Халĕ çак çулпа аслă Китай халăхĕ, мĕнпур халăх демократи çĕршывĕсенчи тата Демократилле Германи Республикинчи ĕççыннисем пыраççĕ.

VIII-мĕш съезд пулса иртнĕренпе рабочи класпа хресченсем хушшинчи çыхăнусем тĕпренех улшăнчĕç. Вĕсем тусла классем пулса тăрса, пĕрле коммунизм тăваççĕ. Калама çук пысăк социализмла улшăнусене пула рабочисемпе хресченсен союзĕ çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ, совет обществин морallĕ-политикăлла пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ.

Партин VIII-мĕш съезчĕ пулса иртнĕренпе Совет çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем ӳссе çирĕпленчĕç, вĕсем мирĕн, демократин, социализмăн çирĕп тĕрекĕ пулса тăчĕç. Коммунистсен партийĕ çул кăтартса, ертсе пынипе Совет государствин вăйĕ хăвачĕ ӳссе тĕрекленчĕ. Советсем—государство тытăмĕн чи демократилле формипе—халăх ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пынă кĕрешӳре пур йывăрлăхсене те çĕнтерчĕç.

Пирĕн çĕршыв малалла, коммунизм патне çĕнтерӳллĕн пымалли чи çаха условии вăл Коммунистсен партийĕн пĕрлĕхĕпе çирĕплĕхĕ пулса тăрать. Совет халăхĕ кĕрешӳре ӳссе çирĕпленнĕ хăйĕн тăван партийĕпе унăн Центральнăй Комитетне чун-чĕререн вăçĕмсĕр шанса тăрать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем совет çыннисене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантараççĕ.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, партипе Совет правительстви халăха ырлăх кӳме куллен тăрăшса ĕçленипе хавхаланса, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планăн заданийĕсене ăнăçлăн тултараççĕ, малалла, коммунизм строительствин çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне пыраççĕ.

П. МИХАЙЛОВ,

Чăвашсен государство педагогика институчĕн аслă преподавателĕ.

РАЙОНСЕНЧИ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ

Чурачăк

Чурачăк районĕнчи парторганизацин конференцийĕнче райкомăн отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ К. Павлов юлташ тунă доклада делегатсем активлăн сӳтсе явреç.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление пурнăçласа, район партилле-организацилле, партилле-политикăлла ĕçе малалла лайăхлатнă, хуçалăхпа культура строительстви планĕсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешӳре пуçламăш парторганизацисен рольне чылай ӳстернĕ. Çакă вăл вырăнти промышленность предприятийĕсен ĕçĕ лайăхланнинче, колхозсем организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕрекленсе пынинче курăнать.

Колхозсемпе машина-трактор станцийĕ кăçал уй-хир ĕçĕсене кĕскерех срокра тата лайăхрах ирттернĕ, вылăх апачĕн никĕсне чылай ӳстернĕ. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана район, пĕтĕмĕшпе илсен, ирттерсе тултарнă. Колхозниксем обществăлла хуçалăхран илекен тупăш чылай ӳснĕ.

Нумай делегатсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ялти парторганизацисен ĕçĕнче тупса палăртнă çитменлĕхсем Чурачăк районĕнчи парторганизаци ĕçĕнче те пулнине кăтартса пачĕç, çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме кирлĕ таран мерăсем йышăнманшăн райкома хытă критиклерĕç.

Парти решенийĕсемпе директивĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырасшне организаторла ĕç татса парать. Парти райкомĕн организаторла ĕçĕ паянхи задачăсен сулĕшĕнче тăраймасть-ха.

— Халĕ пирĕн умра ялти политикăлла ĕçе, массăсене коммунизмла воспитани парас ĕçе тĕпренех лайăхлатас задача тăрать,—терĕ Мичурин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Мефодьева юлташ.—Ку тĕлĕшпе райком пире кăтартусем нумай пачĕ, анчах вĕсене пурнăçа кĕртме сахал пулăшать. Юлашки вăхăтра пирĕн колхозра политикăлла-массăлла ĕç, политкружок ĕçĕ япăхланчĕ. Кружок руководителĕ—райисполком председателĕн заместителĕ Петров юлташ. Вăл кружока та ячĕшĕн çеç ертсе пырать, ытти ĕçе вара хутшăнма шутламасть. Çакăн çинчен райком пĕлет, анчах Петров юлташ умне çирĕп требовани лартмасть.

Райкомăн парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсен пайĕн заведующийĕ Никонов юлташ чылай пуçламăш парторганизацисен, вăл шутра райисполкомри парторганизацин секретарьне те, партилле ĕçе начар ертсе пынăшăн критиклерĕ.

Конференци умĕн пуçламăш парторганизацисенче ирттернĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче ялсенчи коммунистсем райкома нумай сĕнӳсем панă. Çав сĕнӳсемпе асăрхаттарусене тĕпчесе вĕренес тата вĕсем тăрăх практикăлла мерăсем йышăнас тĕлĕшпе райком нимех те туман-ха.

«Победа» колхозра комсомол пуçламăш организацийĕ пур, анчах ăна ертсе пыракан çук. Ку организацие ВЛКСМ райкомĕ нимĕн чухлĕ те пулăшмасть. Колхозри коммунистсем хăйсен отчетпа суйлав пухăвĕнче райкомран ВЛКСМ райкомĕн ĕçне лайăхлатма ыйтнă.

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ пулин те, ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем пирĕн яла пырса курмарĕç,—терĕ колхоз председателĕ Григорьев делегат.

Кондратьев, Димитриев, Петрова делегатсем тата ыттисем те райкомпа райисполкома вĕсем колхоз председателĕсен, хуçалăхăн чи кирлĕ отраслĕсене ертсе пыракан работниксен кадрĕсене тĕреклетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклерĕç. Районти пур колхозсене те МТС штачĕнче тăракан агрономсемпе зоотехниксене уйăрса янă. Анчах вĕсем колхоз производствине организацилес ĕçе мĕнле пуçăннине райкомпа райисполком халĕ уçăмлăн пĕлсе тăраймаççĕ.

Районта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне нумай ӳстернĕ колхозсем, уй-хир бригадисем, фермăсем сахал мар. Докладчик тата тухса каланă юлташсем кăçал пысăк çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектар пуçне 20-шер центнер ыраш, тулă, вир туса илнĕ нумай бригадирсен ячĕсене асăнчĕç. Анчах малта пыракансен опычĕ пур колхозсен тивĕçлĕхĕ пулса тăраймасть-ха.

Райкомпа райисполком ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне, наукăпа практика çитĕнĕвĕсене сарас, вĕсене колхоз производствинче ĕçе кĕртмелле тăвас тĕлĕшпе кирлĕ таран мерăсем йышăнман. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен, партипе правительство ялхуçалăхĕн чи кирлĕ отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе йышăннă постановленисем çинчен пропаганда тăвассине чылай пуçламăш парторганизацисенче кампанилле ĕç вырăнне хунă. Вĕсем икшер-виçшер калаçу ирттернĕ те, çавăнпа лăпланса ларнă. Райком çав йăнăшпа тӳрлетме васкаман.

Чурачăк районĕнче обществăлла вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ялхуçалăхĕнче чи кая юлнă участок пулса тăрать. Кăçал районта сăвакан кашни ĕне пуçне 10 уйăх хушшинче вăтам шутпа 572 литр сĕт суса илнĕ. Вылăхсене алăран тăрантарса усрама тытăннă çеç-ха, анчах уйрăм колхозсенче тӳсме çук начар пăхнă тĕслĕхсем пур. Райкомпа райисполком вылăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри хуçасăрлăха пĕтерме, çав отрасле çирĕп кадрсемпе тĕреклетме тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

МТС ĕçне лайăхлатасси çине те райкомпа райисполком çителĕксĕр пăхнă.

Конференци районти парторганизацин ĕçне малалла лайăхлатма решени йышăнчĕ, райкомпа ревизи комиссийĕн çĕнĕ составĕсене суйларĕ.

Райкомăн организацилле пленумĕ КПСС райкомĕн секретарĕсем пулма К. Павлов, Н. Краснов тата С. Аллюров юлташсене суйларĕ.

Н. ВОЛКОВ,

(Хамăр корр.).

Çĕмĕрле

Отчетлă тапхăр вăхăтĕнче, парторганизаци ертсе пынипе, Çĕмĕрле районĕ хуçалăхпа культура строительствинче чылай çитĕнӳсем тунă. Районти промышленность иртнĕ çулхи производство планне 101,7 процент, кăçалхи 10 уйăхри плана 104,7 процент тултарнă. Кăçалхи 10 уйăх хушшинче, пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан, валовăй продукци туса кăларасси 4,4 процент ӳснĕ. Йывăç янаçсем тăвакан завод, çăкăр пĕçерекен комбинат, механизациленĕ арман султалăкри плана тултарнă. Унчев плана тултарайман вăрманпромхоз 10 уйăхри плана 111,4 процент тултарнă.

Промышленность çултан-çул ӳсĕм туса пырать пулин те, унăн ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай-ха. Хăшпĕр предприятисем, сăмахран, «Лесоруб», «Обоз», «Партизан» промартельсем, уйрăм çынсем валли тумтир çĕлекен мастерской плана тултарса пыраймаççĕ. Хулари строительство ĕçĕсем вăраххăн пулса пыраççĕ. 32-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управленийĕ строительство планне иртнĕ çулта 34,8 процент, кăçалхи тăхăр уйăхри плана 29,4 процент кăна тултарнă. Строительствăпа монтаж управленийĕ çакăн пек начар ĕçленине пула сĕтел-пукан тăвакан комбинатăн электроэнерги никĕсне, металл деталĕсем тумалли цеха ĕçе ярасси тытăнса тăрать. Пурăнмалли суртсем, шкулпа ача сачĕсен сурчĕсене тăвасси юлса пырать.

Районти ялхуçалăхĕнче те хăшпĕр ӳсĕмсем пур. Анчах кунта ӳсĕмсенчен çитменлĕхсем ытларах. Хăшпĕр колхозсем палăрмаллах çĕкленсе пыраççĕ пулин те, районта юлса пыракан колхозсем чылай. Сăмахран, «Красный пахарь», «1 Мая», «Ударник», Свердлов ячĕпе тăракан тата Макарин ял Советĕнчи колхозсем пухса илекен тырпул тухăçĕ 4—5 центнертан иртмест. Вылăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш та пысăк мар. Бу колхозсенчи çитменлĕхсем пĕтĕмпех ĕç дисциплини начаррипчен килнĕ. Районти пĕтĕм колхозниксен виççĕмĕш пайĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Чылай колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçсем вăраха кайнă. Паянхи кунă районĕпе 653 гектар çинчен пухса кĕртнĕ тырпула çапса пĕтермен.

— Вăрçă пĕтнĕренпех «Красный пахарь», «1 Мая», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем юлса пынине асăнатăр,—тет Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. Михайлов юлташ.—Анчах вĕсене çĕклеме пулăшас тесе КПСС райкомĕ тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Колхозсем юлса пыни МТС начар ĕçленинчен килнĕ. Механизаци кадрĕсем çитменни, вĕсен ĕç ăсталăхĕ начар пулни МТС ĕçĕнче пысăк чăрмав пулнă. Халĕ те МТС-ра 4 инженер тата техник-механиксем çитмеççĕ. Механизатор кадрĕсене МТС-а ярасси те вăраххăн пулса пырать,—тет МТС-ри партбюро секретарĕ Г. Журналов юлташ.—КПСС райкомĕ МТС директорĕ пулнă М. Тупицын юлташ хăйĕн ĕçне сӳрĕк туса пынине курсатăрсах, ăна ĕçрен хăтармасăр, килĕшсе тăнă.

Медицина учрежденийĕсен, вырăнти Советсен, суту-илӳ организацийĕсен, шкулсемпе ытти культура учрежденийĕсене ертсе пырас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Анчах çав çитменлĕхсене конференцире сахал критиклерĕç. Сăмахран, колхозсене пулăшу парас ĕçре вырăнти Советсем пысăк вырăн йышăнмалла. Анчах вĕсен рольне çĕклесси тата ответлăхне ӳстересси çинчен пĕр Ф. Безверхов делегат кăна пĕр-ик сăмах каларĕ.

КПСС райкомĕн ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсем партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçе тивĕçлипе туса пыманнинчен килнĕ. КПСС райкомĕ кадрсемпе ĕçлесенне кирлĕ пек вырăна хумасть, унăн ĕçĕнче çакăн пек йăла пур: пĕр ĕçре айăпа кĕнĕ е ĕçе юхăнтарнă çынна тепĕр ĕçе куçарса лартаççĕ. Отчетлă тапхăрта номенклатурăна кĕрекен 90 работника пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарнă. Парторганизаци секретарĕсемпе, агитаторсемпе, колхоз председателĕсемпе ирттерекен семинарсем кадрсене ĕçре кирлĕ ыйтусене çутатса параймаççĕ. Колхозсенче квалификацилле лекцисемпе докладсем сайра хутра кăна пулаççĕ. Иртнĕ çулта, сăмахран, «Родина» колхозра райком докладчикĕсем пĕтĕмпе те пĕр доклад кăна туса панă.

Калас пулать, докладчик М. Кузьмин юлташ уйрăм участоксене ертсе пыма хушнă работниксене пачах та критиклемерĕ, пĕтĕмĕшле сăмахсемпе кăна асăнса иртсе кайрĕ. Çавна пула конференцинче тухса калакан 22 çынтан сиввĕ критиклекен сахал пулчĕ.

Райкомăн организацилле пленумĕ КПСС райкомĕн секретарĕсем пулма М. Кузьмин, А. Юдин тата А. Речнов юлташсене суйларĕ.

К. АФАНАСЬЕВ,

(Хамăр корр.).

ФЕЛЬЕТОН

Алăсем çĕкленмеççĕ

Сĕр çинче пурăнакан çынсем тем те пĕр сăнаса пĕлеççĕ. Пĕрисем пулăç пулăçа шăсетренех курпине сăнанă. Теприсем çăхан кусне çăхан сăхманнине асăрханă. Йĕпреç поселокĕнчи пурнăçа чылайранпа сăнаса пурăнакансем вара пуçлăх çитменлĕхĕсене палăртакан ĕççĕр тăрса юлнине курнă.

Ача ясли заведующийне—Валентина Ивановна Ладугинăна пĕлмен çын Йĕпреçре çук та пулĕ. Ара, мĕнле пĕлес мар-ха ăна? Унăн килти хуçалăхĕ вĕрсе хăпартнă пек ӳссе пырать. Килкартинче сакăр пăтлă сысна картлатса çӳрет. Симĕç пахчинче çу касиччен пĕр çумкурăк курăймастăн. Унта ӳсекен сĕтеклĕ çимĕçсене выставкăна та tăратма пулать. Пӳртне кĕрсен куç-пуç алчăрать. Сăрланă урай тĕкĕр пек таса, тумтир тавраш çумĕнче пĕр кирĕк курăймăн. Хăнасем валли яланах апат-çимĕç сĕтел тулли. Чаплă хăнасемпе пĕрле ĕçсе-çинĕ чухне Ладугина юрлани ян та ян каять...

Вĕсен кайăксем акмаççĕ,
Вĕсен кайăксем вырмаççĕ,
Вĕсен кайăксем пурнаççĕ, их!—

тесе, ура тапса юрлапине кӳршĕсем часчасах илтеççĕ.

Килĕнче савăнса пурăнакан Валентина Ивановнăн службăри ĕçĕ те çу çинчи пекех шуса пырать. Районти сывлăх пайĕпе республикăри Сывлăх министерствинче «Ладугина ертсе пыракан ача ясли чи лайăххи» текен шухăш тарăн тымар янă. Район тата поселок Совечĕсенче унăн ĕçĕсене мухтаççĕ. Кĕскен каласан, ăна алă çинче çĕклесе çӳременни кăна.

Ача яслинче ĕçлекенсем—Елена Моисеевăпа Лидия Осипова хăйсен пуçлăхĕн çĕр сум укçа та, çĕр пĕлĕш те пуррине пĕлмен. Çавна пĕлмен пирки вĕсем Ладугина пăтранчăк шывра пулă тытни çинчен районтан çӳлерех тăракан организацисене çырса янă. Хăйсем çырнине районти прокурор патне тĕрĕслеме ярса парассине те тавçăрса илеймен пулмалла. Вĕсем Валентина Ивановнăн шурă питне хĕретме. кӳрентерме хăюлăх çитернĕ. Çырура Моисеева икĕ çул, Осипова пилĕк çул Ладугина патĕнче тӳлевсĕр ĕçлесе пурăнни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем Ладугина хăйĕн пахча çимĕçне пăхса ӳстерттернĕшĕн, ясли супăнĕпе кĕпине çутарттарнăшăн, пӳрт ăшчикне тасаттарнăшăн ӳпкелешнĕ. Анчах Ладугина: эпĕ пуçлăх, пуçлăхăн юр пек шурă, кăпăк пек çемçе алăсене килти ĕçре хуратни килĕшмест, тет пулмалла.

Елена Моисеевăпа Лидия Осиповăна ясли кухнинче юлакан апата Ладугина хăйĕн сысни валли çĕклеме «шаннă». Хутран-ситрен, пĕтĕмпе 25 пăт пулĕ, ясли çĕрулмине сыснасене çитерме çĕкленĕ Моисеевăпа Осиповăна Ладугина Йĕпреçрен вунсакăр çухрăмри Хурамал пасарне хăйне валли çăмарта илме чуптарнă. Ясли пуçлăхĕ апат-çимĕç туянă чухне суя документсем туса кăçал виçĕ пин тенкĕ ытла хăй кĕсйине чикнĕ.

Кусем ăнсăртран пулнă вак-тĕвек ĕçсем. тесе шухăшланă пулас районти прокуратурăра «Советская Чувашия» хаçат редакцийĕнчен Моисеевăпа Осипова çырăвне тĕрĕслеме ярса парсан. Çавăнпа. хăвăртрах тĕрĕслесе тупсăмне тупас вырăнне, çыру авторĕсен хушаматне Ладугинăна пĕлтерме васканă. Уголовнăй кодексра хаçат корреспонденчĕсен хушаматне пĕлтерекенсене айăпламалли çинчен калакан статья пуррине прокуратурăра ĕçлекенсем манnă пулас.

Ладугина киревсĕр ĕçсем туни çинчен 1948 çултанпах тĕрлĕ çынсем тĕрлĕ çĕре çырса пĕлтереççĕ. Вăл жалоба паракансен çăварне хуплама вĕренсе çитнĕ. Хальхинче те, хăйĕн яланхи йăлипе, Моисеевăпа Осиповăна ĕçрен кăларса сирпĕтнĕ.

Тĕрĕслĕх шывра та путмасть, вутра та çунмасть, теççĕ. Тĕрĕслĕхе шыракан Моисеевăпа Осипова прокуратура хăйсен хушаматне Ладугинăна пĕлтерни çинчен тепĕр хут çыраççĕ. Çавăн хыççăн парти райкомĕ, вĕсен çырăвĕнче кăтартнисене тĕрĕслесе тухса, Ладугина çинчен бюро ларăвĕнче пăхса тухма ыйту лартать. Анчах... хытă ятланипех иртерсе янă. Мĕншĕн тесен бюро членĕсем аллисене çĕклеме хăяйман.

Мĕншĕн-ха алăсем çĕкленмеççĕ?

Бюро членĕсенчен пĕри—райсовет исполкомĕн председателĕ П. Васильков. Вăл ача ясли валли апат-çимĕç райсоюз магазинĕ урлă илмеллине питĕ лайăх пĕлет. Апла пулсан та, вăл ялине сĕт сутса пурăннă. Государствăна обязательнăй йĕркепе памалли сĕте те, çу заводне мар, ялине леçнĕ. Кунта эпир Васильков юлташ колхозсенчен купăста тата ытти япаласем илни çинчен асăнмасăрах иртерсе ярăпăр.

Прокурор Кочетков арăмĕпе пĕрле Ладугина патĕнче ĕçкĕ-çикĕре пулать.

Райком секретарĕсенчен пĕрин—Димитриевăн хуньăшĕ Ладугинăпа пĕрле ĕçсе-çиет, унăн хунĕшпе килĕштерсе пурăнакан çынна кӳрентерес килмест.

Бюро членĕ Оленина вара Ладугинăшăн пушă вăхăтра пĕр-пĕрин патне кайса вăхăта иртермелли тус.

Çапăнпа вĕсем Ладугинăн киревсĕр ĕçне тивĕçлипе хаклас вырăнне, ăна хӳтĕлеме пуçланă. Сасăланă чухне те аллисене хăюсăрланса, Ладугина курмалла мар кăна çĕкленĕ. Димитриевпа Кочетков вара, аллисем вăйран кайнăран пулас, апла та, капла та сасăламан.

Пурте хăюсăрри Ладугинăна çĕклентерсех янă.

— Виктор Николаевич ĕçленĕ чухне ман çинчен çыракан жалобăсене кун пек хăвăрт тĕрĕслемесчĕç. Тата жалобăсем яланах тĕрĕс мар пулаканччĕ.—тет вăл.

Ладугина тĕрĕссине калать. Ун çинчен çырнă жалобăсем тĕрĕс пулсан та, ятне тумасан ят тивесрен кăна тĕрĕсленĕ пирки, «тĕрĕс мар» пулса пынă. Халĕ, акă, вăл таса мар чĕреллĕ пулни палăрчĕ пулсан та, ачашланипех иртерсе яраççĕ.

Ладугинăна хӳтĕлекенсем нумай çав. Ăна ĕçрен кăларсанах Сывлăх министерствинчен Арзамасова телефон тăрăх «мĕншĕн пирĕнтен ыйтмасăр ĕçрен кăлартăр» тесе хăратма пуçланă. Поселок Совечĕн председателĕ Горбунов тата районти сывлăх пайĕн заведующийĕ Балябина «тепĕр хут тĕрĕслемелле», тесе сӳреççĕ.

Анчах Горбуновпа Балябина сăмахĕнче те тĕрĕслĕх пур. Ладугина ĕçне тепĕр хут тĕрĕслесе çирĕп ответ тыттармалла.

Павел ЩИПЦОВ.

Колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем сутаççĕ

Вăрнар районĕнчи колхозсем, Калинино районĕнчи ăмăртса ĕçлесе, 1953 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса иртерчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç.

Районти колхозсем хăйсен пĕрремĕш тивĕçне—государствăна тырă памалли плана—сентябрĕн 11-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Ялхуçалăх ĕçченĕсем çĕрулми, пахча çимĕç пухса кĕртессишĕн, государствăна памалли плана срокчен тултарассишĕн ырми-канми ĕçлерĕç.

Государствăна памалли обязательствăсене тултарнă хыççăн. пур колхозсем те çавăн пекех нумай колхозниксем ялхуçалăх продукчĕсене государствăна сутаççĕ. Халĕ государствăна 408 тонна çĕрулми, 114 тонна пахча çимĕç сутнă. Çав вăхăтрах колхозсем государствăна 330 центнер аш-какай, 992 центнер сĕт сутнă.

Шверник ячĕпе тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсем государствăна 760-шар центнер çĕрулми сутрĕç. Çĕрулми сутнăшăн çак колхозсем пĕрер грузовой автомашина илеççĕ.

Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз государствăна 33 пин литр, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 32 пин литр сĕт сутрĕç. Çавăншăн вĕсем пĕрер грузовой автомашина туянчĕç.

Колхозсем государствăна аш-какай нумай сутаççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 116 центнер, Молотов ячĕпе тăракан колхоз—44 центнер, Жданов ячĕпе тăракан колхоз—26 центнер, Хрущев ячĕпе тăракан колхоз 22 центнер аш-какай сутнă.

Аш-какай сутнăшăн колхозсем потребкоопераци урлă ялхуçалăх машинисем, строительство материалĕсем илеççĕ. Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз аш-какай сутса «ГАЗ-69» маркăллă çăмăл автомашина туянать.

Е. ЕФРЕМОВ.

Физкультурăпа спорт ĕçне лайăхлатмалла

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче районсемпе хуласенчи сывлăх пайĕсен заведующийĕсен тата вĕсен физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен заместителĕсен, ирĕклĕ спорт обществисен руководителĕсен республикăри канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура Чăваш АССР Сывлăх министрĕн заместителĕ Вишняков юлташ республикăра физкультура ĕçĕ тата умра тăракан задачăсем çинчен доклад турĕ.

Докладчик республикăри ĕççынисем хушшинче физкультура ĕçĕ аплăн сарални, спортсменсен пултарулăхĕ ӳссех пыни çинчен каларĕ.

Фабрикăсемпе заводсенче, шкулсенче тата совет учрежденийĕсенче те лайăх спортсменсем сахал мар пирĕн. Çапла пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, физкультура ĕçĕнче çитменлĕхсем питех те нумай. Тăвай, Шăхасан, Шăмăршă районĕсенче кăçал ГТО значокĕсен нормисене пĕр çынтан та йышăнман ГТО значокĕсен нормисене парас, спортсмен-разрядниксем пăхса ӳстерес ĕç «Колхозник» спорт обществинче уйрăмах начар пырать. Республикăри мĕнпур физкультурниксемпе физкультурницăсенчен 6 проценчĕ çеç спортсмен-разрядниксем шутланаççĕ. Çакă ĕнтĕ чылай вырăнсенче спорт занятийĕсене тăтăшах ирттерменни, тĕрлĕ секцисен ĕçне тивĕçлипе организацилеменни çинчен калать.

Докладчик Вишняков юлташ тата прение тухса. калакансем физкультурăпа спорт ĕçне шкулсенче начар организациленине палăртрĕç. Вĕсем çавăн пекех республикăри суту-илӳ организацийĕсем спорт инвентарĕ (йĕлтĕр т. ыт. те) кӳрсе килес енĕпе питех те çаврăнăçусăр ĕçленине палăртрĕç.

Чăваш АССР Сывлăх министрĕ Ефимова юлташ физкультурăпа спорт организацийĕсен ĕçне лайăхлатас енĕпе районсемпе хуласенчи сывлăх пайĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

Шавĕ пур, ĕçĕ çук

Кив Атикассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозра шавлă лару пырать.

Кун йĕркинче тăракан ыйту—колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни тата выльăхсене хĕл каçарасси çинчен

Ку ыйтупа кам каласа парать?—ыйтать колхоз председателĕ Г. Кузнецов юлташ

— Ну, юрĕ. Мĕн пĕлнине хам каласа парам.—тесе пуçларĕ сысна фермин заведующийĕ Евалеев юлташ.—Эпĕ кашни ларурах сысна ферми çуртне юсаса пысăклатасси çинчен калаçатăп. Сыснасем валли ку çурт çителĕксĕр, хĕл каçарма май çук.

Малалла колхоз председателĕ Кузнецов калама тытăнчĕ.

— Хăварах пĕлетĕр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе эпир япăх ĕçлетпĕр Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăçалхи плана тултарма тата 21 ĕне выльăх, 230 чăх кирлĕ Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те питĕ начар. Калăпăр, халĕ ĕнесен апачĕ те ура айĕнчех. Анчах вĕсем темшĕн сĕт сахал параççĕ. Çăмарта та пĕлтĕрхинчен сахалтарах тухнă.

Колхоз председательне чарса каллех сысна фермин заведующийĕ Евалеев калама тытăнать.

— Пĕлтĕр хĕл ларичченех выльăхсене утă-улăм пама пуçларăмăр. Çуркунне тĕлне. апат сахалланнипе, выльăхсем начарланса çитрĕç, вилме пуçларĕç. Кăçал та вика утине. улăх утине каллех çитерсе яма пуçларăмăр. Выльăх витисем тума бригада уйăртăмăр. Анчах бригадăн бригадирĕ—правлени членĕ Малашайкин нимĕн те ĕçлемест.

— Витесем тума ыранах тытăнас, йывăç кӳме вăрмана çынсем ярас, выльăх апатне вырăнсăр салатма чарас. Йышăнатпăр-и çапла?—ыйтать председатель.

— Халапне çапатпăр. ĕçне тумастпăр.—чăтса лараймарĕ Калемейкин колхозник.—Мĕн чухлĕ решени йышăнмарăмăр пулĕ. ĕçĕ çав-çавах вырăнтан хускалмасть. Хăлха те йӳсĕхрĕ ĕнтĕ сирĕн йышăнас-тăвас тенипе.

Калаçрĕç. шавларĕç. анчах пĕр ĕç тĕлĕшпе те никама та конкретлă кăтарту парса хăвармарĕç. Хускатнă ыйтусем те сăмах айне пулса юлчĕç.

Кунта çакăн пек тăлсăр шавласси йăлана кĕнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсене лайăх сăхнă пулсан кăçалхи плана колхоз иртнĕ хĕллех тултарма пултарнă. Пĕлтĕр колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленнĕ. Мĕнпур выльăхсемпе кайăк-кĕшĕксене вырнаçтарма витесем, кирлĕ чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлемен. Çитменнине тата выльăх апатне тирпейсĕр тыткалаççĕ.

Кăçал силос план тăрăх 180 тонна хывмалла пулнă пулсан, 70 тонна анчах хывнă.

Выльăх кăшманĕ—сĕтеклĕ апат. Колхозра кăçал выльăх кăшманĕ те акнă. Анчах çав участок çине акнăранпа та этем алли пырса тĕкĕнмен пирки çумкурăк нусса илчĕ Çак «кăшман» паянхи кун та уйрах выртать.

Витесем тумасан кăçал выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре пĕлтĕрхи пекех пысăк чăрмавсем пулма пултараççĕ. Выльăхсем валли стандартлă витесем тăвас пирки иккĕмĕш çул калаçаççĕ. Анчах вĕсене тума строй-материалсем çителĕксĕр. Вăрмантан турттарса килнĕ йывăçа фермăра ĕçлекенсем тата лаша пăхакансем. вутă çук пирки. татса çунтараççĕ. Стройматериалсем турттарма тесе колхоз руководителĕсем решени хыççăн решени йышăнаççĕ, бригадирсене наряд хыççăн наряд параççĕ, анчах та ĕçĕ вырăнтан та хускалмасть.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăх питĕ пĕчĕккĕ Кашни ĕнерен вăтам шутпа кунне 3 литра яхăн кăна сĕт суса илеççĕ. Пĕр сурăхран пĕр килограмм таран çăм касса илнĕ Фермăра ĕçлекенсем хушшинче обезличкăна пĕтермен. Вĕсем те час-часах улшăнса тăраççĕ.

Ĕне ферминче тăватă колхозница ĕçлет. Вĕсене кашнине ĕнесем сирĕплетсе паман. пурте пĕрле пăхаççĕ. Фермăсенче ĕçлекенсене тăтăшах улăштарса тăрас йĕркене пĕтермен. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансене зоотехникăпа ветеринари пĕлĕвĕсене вĕрентессине йĕркелемен.

Колхозри парторганизаци ферма работникĕсем хушшинче политикăлла-масăллă ĕçе туса пымасть. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăх енĕпе йышăннă постановлени тата Хрущев юлташ докладĕ çинчен ферма работникĕсене те. ытти колхозниксене те ăнлантарса паман. Выльăхсене хĕл каçарас ыйту сивĕччĕн тăрать пулсан та ун çинчен парторганизацире сӳтсе явса кирлĕ мероприятисем палăртман.

И. БОРИСОВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

«ПИОНЕРСЕМПЕ ШКУЛ АЧИСЕМ ВАЛЛИ ПАРАНАН ПЕРЕДАЧĂСЕМ ÇИНЧЕН»

Чăваш АССР Культура министерствин радиоинформаци пайĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра ноябрĕн 11-мĕшĕнче пичетленнĕ «Пионерсемпе шкул ачисем валли паракан передачăсем çинчен» ятлă статьяра ачасем валли паракан передачăсен çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ.

Статьяна радиоинформаци пайĕнче ĕçлекенсен производствăлла канашлăвĕнче ВЛКСМ Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, Чăваш АССР Культура тата Сутĕç министерствисен представителĕсемпе пĕрле сӳтсе явнă.

Радиоинформаци пайĕ ачасен передачисене лайăхлатма кирлĕ ĕçсем туса иртернĕ, передачăсен тематикăлла планне тунă чухне хаçат критикăлане шута илнĕ.

«ЧАЙНАЙРА ЙĔРКЕЛЕХ ÇУК»

Октябрĕн 27-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «Чайнайра йĕркелĕх çук» ятлă çырура Шăмăршă район центрĕнчи чайнăй ĕççынисен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерейменни, чайнăйра яланах пĕр тĕрлĕ апат пĕçерни тата ытти çитменлĕхсем çинчен çырнăччĕ.

Шăмăршă райпотребсоюзĕн правленийĕ «Чайнайра йĕркелĕх çук» ятлă çырăва чайнайра ĕçлекенсен канашлăвĕнче сӳтсе явнă. çырура асăннă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс тесе йышăннă. чайнăй ĕçне тĕпрен лайăхлатма мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

Чăваш АССР-ĕнчи шкулсенчи учительсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).

27. Серафима Степановна Владимировăна—Шупашкар районĕнчи Иккассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

28. Николай Владимирович Владимирова—Сĕмĕрле районĕнчи Пĕренешри сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

29. Нина Александровна Волковăна — Йĕпреç районĕнчи Эйпеçри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

30. Александра Тимофеевна Волковăна—Чкаловски районĕнчи Сăкăтри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

31. Мария Васильевна Вороновăна — Шăхасан районĕнчи Çӳлти Вăрманъялĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

32. Васса Герасимовна Герасимовăна—Çĕрпӳ районĕнчи Вăрăмçутри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

33. Александра Евдокимовна Григорьевăна — Советскинчи вăтам шкулти учительницăна.

34. Анна Гурьевна Гурьевăна — Шупашкар районĕнчи Çатра Хучахматри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна

35. Мария Филимоновна Гусаровăна — Советски районĕнчи Тури Ачакри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

36. Клавдия Александровна Гусевăна—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинскри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

37. Перасковия Тихоновна Гусельщиковăна—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи педагогика кабинечĕн заведующине.

38. Елена Тимофеевна Даниловăна — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарапайри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

39. Юлия Петровна Дашковăна—Ишлей районĕнчи Хыркассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

40. Татьяна Тимофеевна Донсковăна—Муркаш районĕнчи Çатракассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

41. Ольга Ивановна Дормидонтовăна—Шупашкар районĕнчи Якимово салинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

42. Марина Евдокимовна Евдокимовăна—Вăрнар районĕнчи Кивĕ Вăрмарти сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

43. Анастасия Егоровна Егоровăна — Шупашкар районĕнчи Кивçурткассинчи пуçламăш шкулти учительницăна.

44. Евдокия Алексеевна Егоровăна — Кувакинăри вăтам шкулти учительницăна.

45. Надежда Михайловна Егоровăна — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тихăнушкăньри пуçламăш шкул заведующине.

46. Феофания Кирилловна Егоровăна—Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкулти учительницăна.

47. Анна Герасимовна Ельмаковăна — Ишлей районĕнчи Явăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

48. Любовь Ивановна Ермолаевăна — Чкаловски районĕнчи Сăкăтри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

49. Мария Кузьминична Ефимовăна — Муркаш районĕнчи Мăн Янăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

50. Лидия Андреевна Захаровăна — Елчĕк районĕнчи Исемпелти пуçламăш шкулти учительницăна.

51. Мария Прокопьевна Захаровăна — Канашри учительски институт çумĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

52. Елизавета Ивановна Ивановăна — Муркаш районĕнчи Йӳçкассинчи вăтам шкулти учительницăна.

53. Мария Ивановна Ивановăна — Элĕк районĕнчи Чуракассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

54. Мария Ипполитовна Ивановăна — Чкаловски районĕнчи Еншикри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

55. Анна Васильевна Ильинана—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашнери сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

56. Юлия Яковлевна Ильинана—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрпусĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

57. Ркия Ильясовна Ильясовăна—Чкаловскинчи вăтам шкулти учительницăна.

58. Алексей Тихонович Исакова — Йĕпреç районĕнчи Эконом поселокри пуçламăш шкул заведующине.

59. Анфиса Степановна Кавказовăна—Сĕнтĕр районĕнчи Юнкăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

60. Лебиба Гереевна Казановăна — Чкаловски районĕнчи Кзыл-Чышмари сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

61. Зинкемель Ямалетдиновна Каштановăна—Чкаловски районĕнчи Хирти Пикшикри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

62. Анастасия Кирилловна Кирилловăна—Красноармейски районĕнчи Çавалçырмари сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

63. Вера Кирилловна Кирилловăна — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашнери сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

64. Зоя Константиновна Константиновăна—Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулти учительницăна.

65 Мария Алексеевна Кошкинăна — Первомайски районĕнчи Именкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

66 Маргарита Макаровна Красновăна—Елчĕк районĕнчи Буривăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

67. Вера Ефремовна Красавцевăна — Шупашкар районĕнчи Иккассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

68. Анастасия Николаевна Крыловăна — Çĕрпӳ районĕнчи Тимĕрчкассинчи пуçламăш шкул заведующине.

69. Клавдия Александровна Кудряшовăна—Первомайски районĕнчи Шăхачри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

70. Анна Ивановна Кузьминăна—Первомайски районĕнчи Турханти вăтам шкулти учительницăна

71. Илья Кузьмич Кузьмина—Красноармейски районĕнчи Мартынкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

72 Антонина Назаровна Лазаревăна—Ишлей районĕнчи Сӳлтикассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

73. Раиса Андреевна Ларинăна—Кувакино районĕнчи Турдаковăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

74. Зинаида Федотовна Лескинăна — Первомайски районĕнчи Аслă Чеменри сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

75. Анна Димитриевна Лисенковăна — Шăмăршă районĕнчи Вырăс Чукалти сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

76. Михаил Леонтьевич Леонтьева — Тăвайри вăтам шкулти учителе.

77. Александра Алексеевна Мадяновăна—Октябрьски районĕнчи Çирĕккасси Туçари сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

78. Анна Максимовна Максимовăна — Çĕрпӳ районĕнчи Ивановăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

79 Анна Павловна Максимовăна—Шупашкар хулинчи 4-мĕш вăтам шкулти учительницăна.

80. Дария Ивановна Максимовăна — Первомайски районĕнчи Шурутри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

81. Пелагея Андреевна Максимовăна — Первомайски районĕнчи Чăваш Çармăсри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

82 Федосия Матвеевна Матвеевăна — Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

83. Василий Тимофеевич Махминова—Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Мăратри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.

84 Раиса Михайловна Мининăна — Чкаловски районĕнчи Алманчăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

85. Александра Михайловна Михайловăна—Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулти учительницăна.

86 Мария Николаевна Михеевăна — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этменти сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

87. Нина Степановна Моисеевăна — Муркаш районĕнчи Орининри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

88. Михаил Моисеевич Моисеева — Шăхасан, районĕнчи Авăспӳрт Кипечри вăтам шкулти учителе.

89. Нина Димитриевна Мурычевăна—Йĕпреçри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

90 Раиса Васильевна Некрасовăна — Канашри учительски институт çумĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

91. Пакизе Шакировна Низиповăна—Чкаловски районĕнчи Кзыл Чишмари сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

92. Екатерина Никифоровна Никифоровăна—Шăхасан районĕнчи Шĕкĕрти сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

93. Мария Гавриловна Никифоровăна—Первомайски районĕнчи Шурутри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

94. Мария Николаевна Николаевăна—Муркаш районĕнчи Хăймалакассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

95. Татьяна Романовна Николаевăна—Красноармейски районĕнчи Бушарти пуçламăш шкулти учительницăна.

96. Феодора Никоновна Никоновăна—Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальти сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

97 Вера Ильинична Никитинăна — Красноармейски районĕнчи Янкасри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

98. Клавдия Михайловна Никитинăна—Шупашкар районĕнчи Çатра-Хучахматри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

99. Анна Николаевна Олангаевăна — Ишлей районĕнчи Хыркассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

100 Ольга Михайловна Осиповăна — Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулти учительницăна.

101 Анна Павловна Охтеровăна—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хурашашри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

102. Варвара Ивановна Павленкăна — Муркаш районĕнчи Орининри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

103. Геннадий Михайлович Павлова — Шупашкар районĕнчи Тĕкĕрçри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.

104. Андрей Николаевич Петрова — Ишлей районĕнчи Мăналти сичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

105. Василий Васильевич Петрова — Октябрьски районĕнчи Чăрăш Туçари сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

106 Валентина Степановна Питерновăна—Сĕнтĕр районĕнчи Кăпасри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

107. Елена Яковлевна Порфуновăна — Комсомольски районĕнчи Аслă Чуракăкри вăтам шкулти учительницăна.

108. Ольга Сергеевна Прокопьевăна — Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимешри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

109. Мария Алексеевна Пудовкинăна—Йĕпреç районĕнчи Туçари сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

110. Анна Александровна Россовăна — Улатăр районĕнчи Атратьри вăтам шкулти учительницăна.

111. Клавдия Александровна Рязановăна—Пăрачкав районĕнчи Лобачевскри пуçламăш шкулти учительницăна.

112. Зинаида Трифоновна Румянцевăна—Чкаловски районĕнчи Анат Туçари сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

113. Мария Александровна Рукавишниковăна—Шупашкар хулинчи 3-мĕш вăтам шкулти учительницăна.

114. Любовь Семеновна Садовниковăна—Куславкка районĕнчи Пучинкери пуçламăш шкулти учительницăна.

115. Иршат Бариевич Сафина—Чкаловски районĕнчи Тутар Сăкăтри сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

116. Галина Михайловна Сафоновăна—Кувакино районĕнчи Ичиксăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

117. Ираида Семеновна Семеновăна — Сĕнтĕр районĕнчи Москакассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

118. Маргарита Сергеевна Сергеевăна—Муркаш районĕнчи Тивĕшри вăтам шкулти учительницăна.

119. Анастасия Гавриловна Сидоровăна—Ишлей районĕнчи Кипечкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

120. Василий Семенович Смирнова — Комсомольски районĕнчи Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

121. Клавдия Яковлевна Смирновăна — Вăрнар районĕнчи Уравăшри вăтам шкулти учительницăна.

122. Зинаида Ефремовна Смирновăна—Первомайски районĕнчи Турханти вăтам шкулти учительницăна.

123. Василий Александрович Соколова—Чкаловски районĕнчи Патăръелĕнчи вăтам шкулти учителе.

124. Вера Петровна Солнцевăна — Муркаш районĕнчи Матьăкри пуçламăш шкулти учительницăна.

125. Антонина Михайловна Сорокинăна—Пăрачкав районĕнчи Куденхăри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

126. Анна Тихоновна Сорокинăна — Калинино районĕнчи Хăмăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

127. Клавдия Ивановна Сорокинăна—Шупашкар хулинчи 5-мĕш вăтам шкулти учительницăна.

128. Агриппина Петровна Степановăна—Советски районĕнчи Мăн Явăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

129. Анастасия Степановна Степановăна—Вăрнар районĕнчи Вăрманкасри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

130. Нина Степановна Степановăна — Муркаш районĕнчи Панклири сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

131. Николай Иванович Суворова — Сĕнтĕр районĕнчи Юнкăри сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

132. Елена Терентьевна Терентьевăна—Калинино районĕнчи Хăмăшри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

133. Петр Тихонович Тихонова—Чкаловски районĕнчи Кзыл Чишмари сичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.

134. Татьяна Трофимовна Трофимовăна—Йĕпреç районĕнчи Чăрăшкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

135. Нина Владимировна Ульяновăна—Первомайскинчи вăтам шкулти учительницăна.

136. Елена Ильинична Уткинăна — Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

137. Ламига Закиевна Фазыловăна — Чкаловски районĕнчи Ыхрасырминчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

138 Мария Ивановна Федотовăна — Первомайски районĕнчи Ишлĕри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

139. Алексей Николаевич Фролова — Пăрачкав районĕнчи Напольнăйри сичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

140. Нина Григорьевна Фроловăна — Муркашри вăтам шкулти учительницăна.

141. Анна Федоровна Храмовăна — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хватукассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

142. Зинаида Владимировна Чумейкинăна—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хурашашри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

143. Людмила Никифоровна Черновăна—Йĕпреç районĕнчи Огонĕк поселокĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

144. Надежда Герасимовна Чугуновăна—Чкаловски районĕнчи Патăръелĕнчи вăтам шкулти учительницăна.

145. Галина Лукинична Шумиловăна—Советски районĕнчи Тинкешри пуçламăш шкулти учительницăна.

146. Калерия Ивановна Юдинăна—Пăрачкаври сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

147. Любовь Ивановна Юхтановăна — Етĕрне районĕнчи Иваньковрри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

148. Анфиса Ивановна Янсалевăна — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăрăшкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕ.

Китайри ĕççыннисен производствăри çитĕнĕвĕсем

ПЕКИН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинчи нумай предприятисен коллективĕсем производство планĕсене срокчен тултараççĕ.

«Женьминьжибао» хаçат паян пĕлтернĕ тăрăх, Харбинра, Тайюаньре, Тяньцзиньре, Уханьре, Чунцинра, Куньминра, Циндаора тата Нанкинра, çавăн пекех Суюань тата Хунань провинцийĕсенче промышленность предприятийĕсем 300 ытла октябрьти производство планĕсене иртерсе тултарнă.

Республикăри хăшпĕр предприятисем çулталăкри программăна тултарнă ĕнтĕ. Вĕсен шутне 53-мĕш номерлĕ завод кĕрет. Çав завод малта пыракан ĕç меслечĕсемпе усă курнипе палăрса тăрать. Унăн коллективĕ çулталăкри программăна октябрĕн 17-мĕшĕнче тултарнă, çак çул вĕçлениччен планран иртерсе 50 миллиард юаньлĕх ытла продукци туса кăларма обязательство илнĕ.

Польшăра çурт-йĕр тăвас ĕç сарăлса пырать

ВАРШАВА, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пичет агентстви Польшăра пурăнмалли çурт-йĕр строительстви анлăн сарăлни çинчен пĕлтерет. Вăрçă вăхăтĕнче аркатса тăкнă Вроцлав хулине хăвăрт юсаççĕ. Вроцлавра пурăнмалли çурт-йĕр тумалли кăçалхи вунă уйăхри плана 110 процент тултарнă. Çак вăхăт хушшинче 2 пин пӳлĕм ытла тунă. Ситес вăхăтра тата 1.250 пӳлĕм туса пĕтереççĕ.

Вроцлаври çынсем пурăнакан чи пысăк района—«Ĕçре малта пыракансен» ячĕпе тăракан поселока—пысăк хăвăртлăхсемпе тăваççĕ. Кунта пурăнмалли çуртсем 100 ытла туса лартнă та ĕнтĕ.

Польшăри Новая Гута ятлă çĕнĕ хулара кăçалхи 10 уйăх хушшинче 5.530 пӳлĕм туса пĕтернĕ. Магазинсем валли 37 пысăк пӳлĕм, обществăлла апатлану пункчĕсем темиçе тунă. Çак çул вĕçлениччен Новая Гута хулинче пурăнакансем тата 1.400 пӳлĕм илеççĕ.

1953 çулхи виççĕмĕш кварталта Гданьск, Сопот, Гдыня порт-хуласенчи ĕççыннисем 2.150 пӳлĕм илнĕ. Гданьскра çĕнĕ район ӳссе ларнă.

Кăçалхи виçĕ квартал хушшинче Польшăри хуласемпе поселоксенче 231 пин çурта тĕпрен юсанă.

Индипе Чехословаки хушшинче суту-илӳ килĕшĕвĕ тунă

ДЕЛИ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Индири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 17-мĕшĕнче Делире Индипе Чехословаки хушшинче тунă суту-илӳ килĕшĕвĕ çине алă пуснă.

Килĕшӳ тăрăх, Инди Чехословакие тимĕр руди, ильментит (титанистăй тимĕр тăпри.—Ред.), йĕтĕн çăвĕ, чей, табак, арахис çăвĕ, шеллак (сăмала йышши япала.—Ред.), слюда, тирсем, шăрт, консервăланă улма-çырласем, çăм тата ытти таварсем те сутать.

Чехословаки Индие тинĕс суднисем валли дизельсем, атă-пушмак промышленноçĕпе резина промышленноçĕ валли кирлĕ машинăсем, вăрман промышленноçĕ валли машинăсем, гидравлически прессем, тĕрлĕ сортлă хут, пĕветмелли сăрăсем, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем, пир-авăр тĕртмелли машинăсем, мотоциклсем, автооборудовани тата ытти таварсем те парса тăмалла.

Чехословакин Индири посолĕ Дурдил çапла каланă: Индипе Чехословаки хушшинче тунă суту-илӳ килĕшĕвĕ çине алă пусни Индипе Чехословакири халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусене малалла тĕреклетсе пыма пулăшĕ.

США Чилин шалти ĕçĕсене хутшăннине хирĕç тăраççĕ

МОНТЕВИДЕО, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Чилире çĕршывăн çутçанталăк пуянлăхĕсене хӳтĕлессишĕн пыракан кĕрешӳ сарăлнăçемĕн сарăлать. Америкăпа Чили хушшинчи пăхăр ыйтăвĕ тăрăх калаçусем пынă май, США Чилин шалти ĕçĕсене сĕмсĕррĕн хутшăннă хыççăн, Америкăн экономикăлла политикине хирĕç тăрасси уйрăммăнах вăйланнă.

Паллă ĕнтĕ, икĕ эрнене яхăн пынă калаçусем путланса ларнă. Чили пăхăр сутас тĕлĕшпе пысăк кризиса кĕрсе ӳкнĕ. Çавна пула çĕршывра экономика тĕлĕшĕнчен калама çук йывăр лару-тăру пулса тăнă. Çак пысăк йывăрлăхпа усă курса, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Чили пăхăрне сутăн илмелли условисем выр nine tĕррĕн требованисем кăларса тăратнă. Çав требованисене Латинла Америкăри прогрессивлă общественность тĕрĕссипех Чилин наци суверенитетне хĕсекен требованисем пулса тăраççĕ тесе хаклать. США хăйĕн нотинче Чили умне çакăн пек требованисем лартнă: пĕр кĕренке пăхăр хакне 28 цент таран йӳнетмелле (Чили правительстви тунă хак тăрăх, пĕр кĕренке пăхăр 35.5 цент тăрать.—Ред.); валютăсене Америка монополисчĕсемшĕн усăллă йĕрке тăрăх ирĕклĕн улăштармалла; Чилин демократиллĕ лагерьти çĕршывсемпе суту-илӳ тумалла мар: налогсен çĕнĕ системине тумалла. Вăл система Америкăн Чилире пăхăр кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен компанисемшĕн усăллă пулмалла; Чилире пăхăр кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен корпораци тумалли плана пăрахăçламалла. Çав корпораци çĕршыври пăхăр промышленноçне тĕрĕслесе тăрас енĕпе ĕçленĕ пулĕччĕ, çав промышленноçа национализацилемелли условисене туса хатĕрленĕ пулĕччĕ.

Чилири общественноçăн анлă ушкăнĕсем хĕснипе, Ибаньес дель Кампо правительстви çакăн пек кӳренмелле условисене сирсе янă, Вашингтонпа пăхăр ыйтăвĕ тăрăх калаçусем иртерме пăрахнă.

Хальхи вăхăтра çĕршывра США Чилие экономика тĕлĕшĕнчен пăхăнтарса тăма тăрăшнине хирĕç протестлесси ӳссех пырать. Тĕрлĕ политикăлла юхăмсемпе обществăлла организацисен представителĕсем пăхăр сутас тĕлĕшпе тухса тăнă кризиса пĕтерме, пăхăра мирпе демократи лагерĕнчи çĕршывсене сутма требовани лартаççĕ.

Футболистсен тĕлпулăвĕ

КОПЕНГАГЕН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Копенгагенра Мускаври «Динамо» команди футболистсен Копенгагенри сборнăй командипе тĕл пулса вылянă. Копенгагенри командăна хальхи вăхăтра пĕррремĕш вырăн йышăнса тăракан Кеге хулинчи командăри икĕ футболиста кĕртнĕ. Футболистсен вăййине курма 30 пин çын пынă. Ăмăртура динамовецсем 2 : 1 шутпа çĕнтернĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин. Вăрçă чарăннă хыççăн Корея халăхĕ вăрçă вăхăтĕнче юхăннă халăх хуçалăхне хăвăрт юсаса малалла аталантарасшăн тăрăшса ĕçлет. Фабрикăсемпе заводсенче çулталăкри плана срокчен пурнăçлассишĕн ăмăрту сарăлнă. Рабочисем ĕç нормине иртерсе тултараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пĕр завод цехĕнче станочник Цой Вон Дин ĕçлет. Вăл ĕç нормине пĕрмаях 150—175 процент тултарса пырать.

Совет кинофильмĕсене юратса пăхаççĕ

ПХЕНЬЯН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянра совет кинофильмĕсене кăтартмалли вунăкунлăх вĕçленнĕ. Вунăкунлăх Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнине уявланă кунсенче пуçланнă. Пхеньянри 100 пин çынна яхăн «Адмирал Ушаков», «Возвращение Василия Бортникова», «Максимка», «Чук и Гек», «Счастливое детство» тата ытти илемлĕ тата документлă кинофильмсене пырса курнă. Куракансем совет киноискусствин произведенийĕсене пысăк хак параççĕ.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕм çĕршывра совет кинофильмĕсене кăтартмалли вунăкунлăх пуçланать.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ДЕМИЛИТАРИЗАЦИЛЕНĔ ЗОНĂНА КĔРЕКЕН РАЙОН ÇИНЕ ТУПАСЕНЧЕН ПЕНĔ

ПЕКИН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 18-мĕшĕнче перемири тĕлĕшпе ĕçлекен çар комиссийĕн ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕн главнăй делегачĕ Ли Сан Чо генерал-лейтенант Америка енĕ демилитаризациленĕ зонăна кĕрекен район çине тупăсенчен пени çинчен каланă. Тупăсенчен Саннĕнран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехрс, демаркациллĕ линирен çурçĕртерехре вырнаçнă Кĕходон сывăхĕнчи район çине пенĕ.

Ли Сан Чо генерал-лейтенант çакăн пек требовани лартнă: 4-мĕш пĕрлехи инспекци ушкăнĕн çак ĕçе вырăнта тĕпчесе пĕлмелле. США-н главнăй делегачĕ Лейси çак требованипе килĕшнĕ. 4-мĕш пĕрлехи инспекци ушкăнĕ ыран кăнтăрла иртсен икĕ сехетре тĕл пулать, тесе решени йышăннă.

КЕНИРИ ТЕРРОР ВАЙЛАНАТЬ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Найробирен (Кени) пĕлтернинчен çакă паллă: ĕнер Англи авиацийĕн «Линкольн» йышши бомбардировщикĕсем Абердэр тăвĕсен районĕнчи негрсем пурăнакан ялсем çине йывăр бомбăсем 17 пăрахнă.

Англи сывлăш-çар вăйĕсен офицерĕсенчен пĕри çапла пĕлтернĕ: Англи авиацийĕ малалла та бомбăсем пăрахĕ, тенĕ.

США-н, Англин тата Францин Бермут утравĕсем çинчи канашлăвĕ пирки

ДЕЛИ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио çапла пĕлтернĕ:

«Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден патне çыру янă. Унта Бидо Бермуд утравĕсем çинчи конференци çинчен решени йышăннă чухне Францине кирлĕ пек канашласа пăхманшăн хăй пăшăрханнине палăртнă.

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Бидо кабинет ларăвĕнче çакна кăтартса панă: Бермуд утравĕсем çинчи конференци çинчен Франци правительствине юлашки самантра кăна пĕлтерчĕ май, вăл пăшăрханни çинчен пĕлтернĕ, тенĕ.

Франци президенчĕ Ориоль: Бермуд утравĕсем çинчи конференци çинчен хаçатсем пĕлтерниччен пĕлтĕм, тесе кăтартса панă пулнă. Бидо ун хыççăн çавăн пек пĕлтернĕ».

ПАРИЖ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтернипе пичетлесе кăларнă. Унта Бермуд утравĕсем çинче пулмалли канашлăва Франци чĕнни çинчен пĕлтернисем «тĕрĕсех мар» пулни çинчен кăтартса панă.

ПАРИЖ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Министрсен Совечĕн ĕнерхи ларăвĕнче Венсон Ориоль вăл Бермуд утравĕсем çинче канашлу пухасси çинчен хаçатсенчен кăна пĕлнĕ, тесе ӳпкелешнĕ. Ăна хирĕç Жорж Бидо çапла каланă: Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине çак канашлу çинчен юлашки минутра кăна асăрхаттарнă, Вашингтонпа Лондон çак решение малтан Франци правительствипе канашласа пăхмасăрах йышăннă, тенĕ.

«Юманите» хаçат çапла çырать: çак факт «акăлчансемпе американецсем Франци правительстви çине йĕрĕнсе пăхнине уççăн кăтартса парать, Вашингтонпа Лондон Ланьеле Бермуд утравĕсем çине пыма хушма шут тытнине пĕлтерет... Германи реваншисчĕсене хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе Ланьеле тĕрĕс обязательствăсем йышăнтарасси çинчен сăмах пырать».

Францин Наци пухăвĕнче

ПАРИЖ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Францин Наци пухăвĕн ĕнерхи касхи ларăвĕнче «пĕрлешӳллĕ Европа» тата «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» текенскерне тумалли проектсен ыйтăвне сӳтсе явнă.

Чи малтанах ЮДСР членĕ Эдуард Бонфус тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: асăннă проектсем пирки Франци халăхĕ тĕрĕссипех пăшăрханать.

«Халĕ тума шутлакан Европа, — тенĕ вăл,—каскăпа атă тăхăннă Европа — эпир ĕмĕтленсе пурăннинчен мăшкăллани пулать. Ку вăл—çар пĕрлешĕвĕ. Çак пĕрлешӳ, чи малтан пуçласах хăйĕн никама пăхăнманлăхне хĕех сирсе яракан Пĕрлешӳллĕ Штатсене пăхăнса тăракан çар пулса тăрать».

«Европа çарне» туни Францин экономикине тата вăл çар тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмасăр пурăннине хăратса тăрать. Çак хăрушлăха кăтартса парса, Бонфус çакна паллă тунă: халĕ пăхса тухакан проектсене йышăнас пулсан, Франци çарне пĕтерсе ларттĕччĕç, Хĕвеланăç Германи çарне тепĕр хут тăвĕччĕç.

Сенгор (тинĕс леш енчи территорисенчи независимăй депутатсен ушкăнĕн членĕ) тата де Мантон (МРП) «Европа çарне» тăвассишĕн тухса каланă. Вĕсен хыççăн трибуна çине депутат-коммунист Франсуа Бийу хăпарнă. Вăл çапла каланă: хальхи вăхăтра Франци умне татăклă ыйту лартнă—Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетме кирлĕ-и, кирлĕ мар-и? Халĕ тума палăртакан «Европа çарне», тенĕ малалла Бийу, Америка генералĕ ертсе пымалла. «Европа çарĕпе» империализмла пĕрлешӳсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пурнăçланă çĕрте кăна мар, «шалти йĕркесĕрлĕхсем» текенскерсем чухне те, урăхла каласан, забастовка тăвакансемпе манифестантсене хирĕç те усă курма палăртаççĕ.

Бонра тата Парижра тунă договорсем хăрушлăх пулса тăраççĕ. Вăл хăрушлăх пĕр вăхăтрах пĕтĕм тĕнчери мире, Францин хăрушсăрлăхĕпе никамă пăхăнманлăхне, рабочи класăн тата пĕтĕм халăхăн интересĕсене хăратса тăрать. Коммунистсен партийĕ мĕнпур французсене çакăн пек хăрушлăха пĕтерсе лартма никам çĕмĕрейми чăрмав туса хума чĕнсе калать. Бонра тата Парижра тунă договорсем Францин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен ыйту лартаççĕ. Çак договорсене хирĕç кĕрешсе, эпир Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетессишĕн, Францин никама пăхăнманлăхĕпе хăрушсăрлăхĕшĕн, ĕççыннисен чăн-чăн интересĕсемшĕн кĕрешетпĕр. Наципе хирĕçле политикăна пула тухса тăракан мĕнпур тăваксене ĕççыннисен тӳсме тивет.

Франци политики патне, миршĕн, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн демократиллĕ ирĕклĕхсемпе социальнăй малашлăхшăн кĕрешмелли политика патне куçмалли вăхăт çитрĕ, тенĕ Бийу.

Индири хаçат США-н Азири агрессиллĕ планĕсем çинчен

ДЕЛИ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсенче çар базисем тума хăтланнă пирки Индири общественноçпа хаçатсем пăшăрханаççĕ.

«Нейшнл геральд» хаçат редакци çырнă статьяра çакна палăртать: «Вăтам Хĕвеланăçĕнчи оборона организацийĕ, икĕ енлĕ çар союзĕсем пекех (вăл союзсене хальхи вăхăтра Пĕрлешӳллĕ Штатсем тăваççĕ), сивĕ вăрçа вăйлатнине пĕлтереççĕ тата Инди, Афганистан, Бирма чиккисем çывăхĕнче вăрçă пуçланса каяс хăрушлăха ӳстереççĕ... США Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсенче хăйĕн çар базисене тума тăрăшни вăл США хăрушсăрлăх мар, агресси тума тăрăшни пулать».

Хаçат Пĕрлешӳллĕ Штатсем «Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсен хăрушсăрлăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн чăн-чăн хăрушлăх пулса тăраççĕ», тесе палăртать.

Пакистанпа США хушшинче пыракан калаçусем пирки асăнса, хаçат çапла çырать: «Кашмир çинчен тăракан тĕрĕслĕхлĕ ыйтăва ООН-ăн Хăрушсăрлăх Советĕнче мĕншĕн татса паманни» халĕ паллă ĕнтĕ.

США-па ПАКИСТАН ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ ÇИНЧЕН

КАРАЧИ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Пакистан таймс» хаçатăн специальнăй корреспонденчĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Англин Британи империйĕнчи çĕршывсем енĕпе ĕçлекен министерствин официальнăй представителĕ çапла каланă: США-па Пакистан çар союзĕ тăвасси çинчен калаçусем иртереççĕ. Корреспондент ыйтăвĕсем çине ответлесе, представитель çапла хушса хунă: халиччен те «Вашингтон та, Карачи те Англи правительствине çакăн çинчен пĕлтермен, анчах Англи правительстви ун пек калаçусем пыни çинчен пĕлет».

Парижри ушкăнсенче, тесе çырать малалла корреспондент, Вашингтонри калаçусем пынă вăхăтра çавăн пекех Пакистанпа Турци хушшинче те калаçусем пыраççĕ, тесе шутлаççĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Октябрьски районĕнчи Винокуров ячĕпе тăракан колхозри комсомол пуçламăш организацийĕн ĕçĕнчи ситменлĕхсем çинчен çырнă çыру «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ КПСС Октябрьски райкомне тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Райком çырура асăннă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Çырура асăннисене тĕрĕслеме, комсомол пуçламăш организацине ĕçри ситменлĕхсене пĕтерме пулăшма парти райкомĕн парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕн заведующийĕ Оливанов юлташа комсомол райкомĕн секретарĕ Матвеев юлташ ятарласа çак колхоза кайнă. Вĕсем пуçламăш организацие ĕçе йĕркелеме пулăшнă.

КПСС райкомĕ колхозри парти пуçламăш организацийĕн секретарьне Степанов юлташа комсомол пуçламăш организацине тивĕçлипе ертсе пыма хушнă.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Элĕк районĕнчи «Сталинград» колхозран килнĕ çырура Тенири вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Леонтьева вулав çуртне пыракан çамрăксене кăмăллăн кĕтсе илменни, вĕсене час-часах кӳрентерни çинчен çырнăччĕ. Çырăва редакци ĕççынни депутачĕсен Элĕк район Совет исполкомĕн культура пайне, ситменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăнма янăччĕ.

Райисполкомăн культура пайĕ çыру авторĕ Леонтьевăна тĕрĕс критиклени, çамрăксене кӳрентернĕшĕн ăна асăрхаттарни, художествăлла пултарулăх кружокĕсен ĕçне йĕркелеме хушни çинчен пĕлтерчĕ.

Колхоз çамрăкĕсен каçхи шкулĕ

ЙĔПРЕÇ. Огонекри çичĕ çул вĕренмелли шкул çумĕнче колхоз çамрăкĕсем валли каçхи шкул уçнă. Шкулта 15 çын вĕренет. Занятисем октябрĕн 15-мĕшĕнче пуçланчĕç те, йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

И. ИОНОВ.

Кĕскен

★ **Çĕнĕ общежити.** Шупашкарти пирăвăр фабрики пулнă çуртра рабочисемпе работницăсем валли пысăк та паха общежити тăваççĕ. Пурăнмалли пӳлĕмсене хитре сăрланă. Кунтах рабочисем валли кино курмалли, вуламалли залсем, библиотека, столовăй тата ытти те пулаççĕ.

И. ДУБИНИН.

★ **Çыхăну уйрăмĕн çурчĕ.** Шăхасан районĕнчи Ямашри çыхăну уйрăмĕ валли çĕнĕ çурт туса пĕтернĕ. Унта 20 номерлĕ коммутатор вырнаçтарнă. Кунтах перевет касси ĕçлет.

Х. ГОРДЕЕВ.

★ **Двигательпе ĕçлекен çăл.** Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз фермăсем çывăхне двигательпе ĕçлекен çăл тунă.

М. ФЕДОРОВ.

★ **Электростанци туяннă.** Советски районĕнчи Мăн Чурашри вăтам шкул «Киев» маркăллă электростанци туяннă. Электростанци вăйĕпе шкулта Ильич лампинсем çутатаççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

★ **Шахмат секцийĕ.** Чăвашсен педагогика институтĕнче шахмат секцийĕ ĕçлет, унта 48 çын. Час-часах турнирсем пулса иртеççĕ. Çапла çамрăк шахматистсем хăйсен квалификацийĕсене ӳстерсе пыраççĕ. Ю. Скворцов, А. Сыраев, Е. Сафронов, В. Гладкий тата ыттисем те иккĕмĕш е виççĕмĕш разрядри шахматист ятне илнĕ.

Л. СТЕПАНОВ.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН (ТĂВАТТĂМĔШ СОЗЫВ) САККĂРМĔШ СЕССИНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ депутатсене çакăн çинчен пĕлтерет: 1953 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче, юнкун, каçхине 7 сехетре ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн саккăрмĕш сессийĕ (тăваттăмĕш созыв) пухăнать.

Сесси Советсен çуртĕнче, ларусен пысăк залĕнче (Ленинградски урам, 42-мĕш çурт) пулать.

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ИСПОЛКОМĔ.

Пĕлтерни

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче парти историне вĕренекенсем валли ушкăнлă консультаци пулать. Тема: «Российăра рабочисен социал-демократла партине туса хурассишĕн кĕрешни».

Консультацие Г. Н. Макшанцева иртерет.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ыйтусемпе ответсем

ЫЙТУ: Куракăсем ӳснипе тăпра нумайланса пырать. Тăпра нумайланнипе çĕр чăмăрĕ пысăкланса пымасть-ши? Çĕр çинче çитĕнекен ӳсентăрансенчен пулнă çĕр кăмрăкĕ мĕнле майпа çĕр айне пулса юлнă?

А. Михайлов, Чурачăк районĕнчи Такана ялĕ.

ОТВЕТ: Ӳсентăрансемпе чĕрчунсен пурнăçĕнче углерод текен элемент пысăк вырăн йышăнать. Углерод ӳсентăрансенчен чĕрчунсен организмне куçать, чĕрчунсенчен сывлăша лекет, сывлăшран каллех ӳсентăрансен организмне лексе, вĕсенче пулса пыракан органикăлла веществосен составне кĕрет. Çакăн пек пулса пынипе çутçанталăкри углерод çаврăнăшĕ тесçĕ. Углерод çаврăнăшĕ çинчен тĕплĕрех калăпăр.

Ӳсентăрансем çитĕннĕ чухне хăйсен сулçисемпе сывлăшран углекислăй газ текен веществăна уйăрса илеççĕ. Углекислăй газ составне углерод тата кислород кĕрет. Ӳсентăран сулçи ăшĕнче углекислăй газран углерод уйăрăлса сулçăрах юлать, кислород каялла сывлăша тухса саланать. Ӳсентăран ăшне лекнĕ углеродран тата тымар тăрăх сӳлелле хăпарнă веществосенчен тĕрлĕ органикăлла веществосем пулаççĕ. Органикăлла веществосем пулса пынипе ӳсентăран хуллен пысăкланса, çитĕнсе пырать. Çапла ӳсентăрана çитĕнме углекислăй газ кирлĕ, çак газ пулмасан ӳсентăран çитĕнеймест. Ӳсентăран тунисене пуринчен ытла клетчатка текен органикăлла вещество кĕрет, клетчаткăра 40 процентран кая мар углерод пулать. Çак углерода ӳсентăран хăй ӳснĕ чухне углекислăй газран уйăрса илнĕ.

Çĕр çинче ӳсентăрансем тахçантанпах çитĕнеççĕ, темиçе çĕр миллион çул сывлăшран углекислăй газа уйăрса илсе пĕтерсе пыраççĕ, çавăнпа ку тариччен сывлăшри углекислăй газ пĕтĕмпех пĕтсе лармалла. Анчах хирĕçле пыракан процессем ӳсентăранра пулнă органикăлла веществосенчен углекислăй газ туса сывлăша кăларса пыраççĕ. Çавăн йышши процессене пăхса тухăпăр.

Чĕрчунсем ӳсентăрансене çисе пурнăççĕ, вĕсене ӳсентăранра пулнă органикăлла веществосем çитĕнтереççĕ, энерги параççĕ. Ӳсентăранра пулнă органикăлла веществосем чĕрчунсен организмĕнче кислородпа химилле пĕрлешсе тĕрлĕ ытти веществосене куçаççĕ. Çак веществосенчен пуринчен те нумайраххи углекислăй газ пулать, вăл чĕрчунсем сывланă чухне сывлăша тухса пырать.

Хăшпĕр ӳсентăрансем хăрса çĕре ӳкеççĕ. Тĕслĕхрен, вăрманта йăванса кайнă йывăçсем темĕн чухлех тĕл пулаççĕ. Вĕсенчи органикăлла веществосемпе усă курса, тĕрлĕ кăмпасем, бактерисем çитĕнеççĕ. Хăрнă йывăçсем çинче çитĕнекен кăмпасем йышлă пулаççĕ, вĕсем ӳснĕ чухне сывлăша углекислăй газ кăлараççĕ. Йывăççем çинче ĕрчекен бактерисем те углекислăй газ нумай кăларса пурăнаççĕ. Пĕр бактери, питĕ пĕчĕкскер, углекислăй газа нумаях кăлараймасть. Анчах бактерисем хăвăрт ĕрченипе питĕ йышлă пулаççĕ, çавăнпа углекислăй газа нумай кăлараççĕ. Йывăççем çинче çитĕнекен кăмпасемпе бактерисем вăрманти хăрса ӳкнĕ йывăççене часах çĕртсе пĕтереççĕ. Вара йывăç составне кĕрекен углерод углекислăй газ пулса пĕтĕмпех сывлăша кайса пĕтет.

Тĕрлĕ куракăсен тымарĕсем питĕ йышлă пулаççĕ, курăк хăрсан унăн тымарĕсем çĕрме тытăнаççĕ. Курăк тымарĕсене те бактерисем çĕртсе пыраççĕ. Кăштах çĕрнипе тымарсем хуралаççĕ те хура тăпра пулать. Хура тăпрара органикăлла веществосем чылай пулаççĕ. Органикăлла вещество нумай вырăнта чĕрĕ куракăсем лайăхрах çитĕнеççĕ, вĕсен тымарĕсем те вăйлăрах, йышлăрах пулаççĕ. Çавăнпа тăпрара органикăлла вещество нумайланса пырать, хура тăпра сийĕ хулăнланма пултарать. Хура тăпра сийĕ ытла хулăн пулаймасть, вăл çĕрĕн çиелти тинĕрех сийĕнче çеç пулма пултарать. Вăрман ӳсекен нӳрлĕ вырăнсенче хура тăпра сийĕ çӳхе, типĕ вырăнсенче—хирсенче унăн сийĕ хулăн пулать. Пур вырăнта та хура тăпра составне кĕрекен органикăлла веществосем çĕрсе пыраççĕ, вĕсем çĕрнĕ чухне углекислăй газ тухса тăрать. Органикăлла веществосем çĕрсе пынипе хура тăпра сийĕ ытла хулăнланаймасть.

Кăмакасенче йывăç, торф, çĕр кăмрăкĕ çунтарса, эпир чылай углекислăй газ кăларса сывлăша ярать. Пĕтĕмĕшпе каласан, ӳсентăрансем сывлăшри углекислăй газран углерода уйăрса илсе, тĕрлĕ органикăлла веществосем тăваççĕ. Çав вăхăтрах кăмпасем, бактерисем, чĕрчунсем органикăлла веществосенчи углерода кислородпа химилле пĕрлештерсе углекислăй газ туса пурнаççĕ.

Малашне çĕр кăмрăкĕ мĕнле пулни çинчен калăпăр. Хăшпĕр кӳлĕсенче тĕрлĕ ӳсентăрансем чылай хăвăрт ӳсеççĕ те кĕркунне шыв сивĕнсен хăрса кӳлĕ тĕпне ӳкеççĕ. Шывра кислород сахал пирки кӳлĕ тĕпне ӳксе пыракан ӳсентăрансем пĕтĕмпех çĕрсе пĕтеймеççĕ. Кӳлĕ тĕпĕнче çĕрсе пĕтеймен курăк тунисем нумайланнăçемĕн нумайланса пыраççĕ, кӳлĕ ăшăхланать, унăн тĕпĕнче торф пухăнать. Çителĕклĕ вăхăт иртсен, кӳлĕ пĕтсе ларать, ун вырăнне шурлăх пулса юлать. Хăшпĕр шурлăхсенче торф сийĕ питĕ хулăн, вуншар метра çитет.

Шурлăхсем айлăмсенче пулаççĕ, вĕсем çине çурхи шыв кашни çулах чылай вĕтетăм, хăйăр юхтарса пырать, чылай вăхăт иртсен шурлăхсене çиелтен юшкăн шăлса каять те торф сийĕ çĕр айне пулса юлать. Халĕ ĕнтĕ кунта ĕлĕк-авал кӳлĕ, шурлăх пулнине пĕлме те çук. Айлăмсенче, çил вăйсăртарах пулнипе, тусан та нумайрах ларса тулать. Аякран вĕçсе килекен тусан та шурлăхсене çĕр айне пытанма пулăшать. Икĕ-виçĕ çул хушшинче вĕçсе ларнă тусан сийĕ паллă мар. Сăмахран, шурлăх çине вунă çулта пĕр миллиметр хулăнăш тусан сийĕ ларса пырать, тейĕпĕр. Çĕр çулта пĕр сантиметр пухăнать. Вунă пин çул иртсен çак вырăнтах торфла сий çинче пĕр метр хулăнăш тусанран пулнă сий пулмалла. Миллион çулта торф çинчи тусанран пулнă сий çĕр метра çитмелле.

Çĕр сийĕ яланах улшăнать. Хальхи тинĕссем вырăнĕнче ĕлĕк типçĕр пулнă, хальхи типçĕр тĕлĕнче тинĕс сарăлса выртнă. Çĕр çинчи айлăмлă вырăнсем те çӳлелле хăпараççĕ, çӳлĕ вырăнсем аялалла анса айлăма лекеççĕ. Çакăн пек пысăк улшăнусем пулнине темиçе çĕр çул иртсен те сисме май килмест, вĕсем çĕршер пин, миллионшар çулсенче пулса пыраççĕ. Çĕр сийĕ улшăнса пыни çинчен геологи наукни тĕплĕн вĕрентет.

Çĕр айне тăрса юлнă торфран миллионшар çул иртсен çĕр кăмрăкĕ (çĕр айĕнче сахалрах выртсан çемçе кăмрăк, нумайрах выртсан хытăрах сорт—антрацит) пулать. Çапла çĕр кăмрăкĕ ӳсентăранран пулнă пулсан та Çĕр сийĕ яланах улшăнса пынипе чылай аяла лекнĕ. Торфпа çĕр кăмрăкĕ çутçанталăкри углерод çаврăнăшĕнчен вăхătлăха тухса ӳкеççĕ. Анчах этем вĕсене çĕр айĕнчен чавса илсе, çунтарса усă курать, вĕсем çуннă чухне углекислăй газ пулать. Çапла вара çĕр кăмрăкĕнчи углерод та çутçанталăкри углерод çаврăнăшне лекет.

Углерод çаврăнăшне пăхса тухнă хыççăн эпир тăпра пулнипе çĕр чăмăрĕ çитĕнменнине тавçăрса илме пултаратпăр. Çĕр çинчи углерод нумайланма та, сахалланма та пултараймасть. Вăл сывлăшран ӳсентăрана, ӳсентăранран чĕрчуна, чĕрчунран каллех сывлăша куçса çӳрет.

Çакна каласа хăвармалла: торф тата çĕр кăмрăкĕ пулнă чухне углерод сывлăшран çĕре чылай куçать, анчах çав вăхăтрах тĕрлĕ вулкансен кратерĕсенчен тухакан углекислăй газпа çĕрти углерод сывлăша куçса пырать.

Ф. КУЗЬМИН.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 21-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Вей, ветерок».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

ФИЛАРМОНИ—ноябрĕн 21-мĕшĕнче Советсен çуртĕн пысăк залĕнче концерт иртерет. Концертра «Евгений Онегин» тата «Пиковая дама» оперăсен сыпăкĕсене кăтартаççĕ.

Концерт 20 сехетре пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 21-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль «Враги».

16 сехет те 15 минутра тата 20 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-69, обзорсен пайĕ—5-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09027 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2725. Тираж 20.000 экз.